Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

1937
НОЙАБĔР
6
ШАМАТКУН
256 (4768)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус   19-мĕш çул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Çĕмĕрле суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи округ канашлăвĕ Сталин йулташ патне йанă çыру

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Çĕмĕрле комбинатĕнчи, „Бољшевик" заводри, „Труженик" заводри, Çĕмĕрле чукунçул станцинчи, Вăрнар станцинчи, Вăрнар фосфорит заводĕнчи, Йетĕрнери çу заводĕнчи, Долгопољанăри хими заводĕнчи, Елĕкрипе Пăрачкаври йĕтĕн завочĕсенчи рабочисен, служăшчисен, инженерсемпе техниксен пухувĕсем, суйлав округне кĕрекен колхозсемпе совхозсенчи пухусем Сирĕн кандидатурăна Горький суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Советне депутата суйлама пурте пĕр кăмăллăн палăртрĕç.

Предприйатисенчи рабочисемпе работницăсем, служăшчисем, инженерсемпе техниксем, колхозниксемпе колхозницăсем, партире тăманнисем, коммуниссем, комсомолецсем пурте хăйсен пухувĕсенче çак сĕнĕве пысăк хаваслăхпа йышăнчĕç.

Епĕр, заводсенчи рабочисен, служăшчисен, инженерсемпе техниксен пухувĕсен, колхозниксен, коммунисла организацисен, профçсойузсен, комсомол, ĕççынни обшчествисен представителĕсем, Çĕмĕрле суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи округ канашлăвне пухăннăскерсем, Çĕмĕрле суйлав округĕнчи малта пыракан предприйатисемпе колхозсем сирĕн кандидатурăна Горький суйлав округĕ тăрăх РСФСР-чен ССР Сойузĕн Национаљнăçсен Советне депутата суйлама палăртни не пысăк хаваслăхпа йышăнатпăр.

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Пирĕн округри ĕççыннисем Сирĕн кандидатурăна ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртса, хăйсем пирĕн мухтавлă бољшевиксен партийĕ, халăхсен сывăх тата тăван çулпуçĕ, Сире, хаклă Сталин йулташ, чĕререн йуратнине, парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçленине кăтартаççĕ.

Сирĕн аслă йатăр, Сталин йулташ, пирĕн çĕршыври мĕн пур ĕççыннисемшĕн, уйрăмах пирĕн чăваш халăхĕшĕн коммунисăм çĕнтерĕвĕшĕн, халăхăн пур тăшманĕсене пĕтерессишĕн, пĕтĕм ĕççыннисене капиталисăмла пусмăртан тата фашисла тискерлĕхрен ирĕке кăларассишĕн кĕрешмели йалав пулса тăрать. Ĕлĕк патша правителствин колонийĕ пулнă Чăваш çĕршывĕ, халĕ Совет влаçĕ пуçланнăран вара иртнĕ 20 çулхи вăхăт хушшинче чечекленекен социалисăмла автономлă республика, социалисăмла ирĕклĕ ĕç республики пулса тăчĕ.

Епĕр хамăрăн историре курман çĕнтерӳсене есĕр, Сталин йулташ, йертсе пынипе тунă.

Çĕмĕрле округĕнчи ĕççыннисем хушнипе, епĕр сирĕнтен, хаклă тус тата атте Сталин, пирĕн кандидат пулма, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Советне Горький суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшме ыйтатпăр.

Сывă пултăр Марксăн—Енгелсăн—Ленинăн—Сталинăн никам çĕнтерейми аслă йалавĕ!

Округри суйлав умĕнхи канашлу Сойуз Советне суйламали Çĕмĕрле суйлав округĕнчи, Национаљнăçсен Советне суйламали Çĕмĕрле, Вăрнар тата Йетĕрне суйлав округĕсенчи мĕн пур суйлавçăсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă йулташсем!

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, пĕтĕм халăх уйавĕнче, аслă совет халăхĕ Сталинла Конституци тăрăх рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государствин чи аслă оргăнне—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлать. Совет Сойузĕнчи халăхсем хаљхи вăхăтра пурте пĕр шухăшпа пурăнаççĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне лайăхран та лайăх, тивĕçлĕрен те тивĕçлĕ çынсене суйласа лартма хатĕрленеççĕ.

Рабочисем, хресченсем, инженерсем, служăшчисем, коммуниссем, партире тăманнисем тата комсомолецсем хăйсен суйлав умĕнхи пухувĕсенче Национаљнăçсен Советне депутата суйлама халăхăн аслă çулпуçĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă учителĕн тата ашшĕн—Иосиф Виссарионович Сталинăн кандидатурине палăртрĕç.

Çĕмĕрле суйлав округĕнчи заводсемпе колхоз представителĕсен канашлувĕ, Национаљнăçсен Советне депутата суйлама пĕр саслăн Сталин йулташ кандидатурине палăртнă рабочисемпе колхоз пухувĕсен пуçарулăхне калама çук пысăк хаваслăхпа хапăллать, Сталин йулташăн йачĕ савăнăçпа телейĕн символĕ пулса тăрать, унăн йачĕ кĕрешӳре хăйулăх парать тата вăл кĕрешӳре çĕнтерессине шантарать. Сталин йулташ хăйĕн пĕтĕм пурнăçне пусмăрти халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешес ĕçпе çыхăнтарнă—вăл ССР Сойузĕн Аслă Советĕнче пĕрремĕш депутат пулмала.

Епĕр, заводсемпе колхоз представителĕсем, хамăрăн сасăмăрсене йуратнă, тăван Сталиншăн пама хатĕр тăратпăр тата Çĕмĕрле суйлав округĕнчи мĕн пур суйлавçăсене хăйсен сассисене Иосиф Виссарионович Сталиншăн пама чĕнетпĕр, Сталин йулташăн ĕççыннисен интересĕсемсĕр пуçне урăх нимĕнле интерес та çук.

Йулташсем! Çĕмĕрле суйлав округĕнчи рабочисемпе колхозниксен нумай йышлă пухувĕсенче ĕççыннисем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама Ленинпа Сталин соратникĕсен кандидатурисене—совет правителствин пуçлăхĕн Вйачеслав Михайлович Молотовăн, Климент Йефремович Ворошилов, Лазарь Моисейевич Каганович, Михаил Иванович Калинин, Андрей Андрейевич Андрейев, Анастас Иванович Микойан, Влас Йаковлевич Чубарь, Николай Иванович Йежов, Андрей Александрович Жданов, Станислав Викентйевич Косиор тата Совет Сойузĕн Геройĕ Валерий Павлович Чкалов йулташсен кандидатурисене палăртрĕç.

Çавăн пекех тата ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама Мускав Çар Округĕн сывлăшри çар вăйĕсен начаљникĕ Петр Иванович Пумпур, Чăваш АСС Республикĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ, Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн чунтан-чĕререн тăрăшакан, социалисăм строителствинче пысăк мухтавлă ĕçсем тунă, Чăваш республикĕнче халăх тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринцăсене тата буржуалă националиссене çĕмĕрсе тăкса тĕпренех тăпăлтарса кăларас ĕçре çирĕп бољшевик пек ĕçленĕ Алексей Михайлович Розанов, ПСК(б)П Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ, çирĕп бољшевик Иван Василйевич Новиков, Йетĕрне районĕнчи Тури Ачакри „Крестьянская газета" йачĕпе тăракан колхоз председателĕ-орденоносец Андрей Михайлович Краснов йулташсен кандидатурисене те палăртнă.

Епĕр, заводсемпе колхозсен, коммунисла организацисен, профсойузсен, комсомолăн тата ĕççынни обшчествисен представителĕсем, палăртнă кандидатурăсене калама çук пысăк хаваслăхпа та ăулли кăмăлпа кĕтсе илтĕмĕр, вĕсене хĕрӳллĕн хапăл тăватпăр тата Çĕмĕрле суйлав округĕнчи мĕн пур ĕççыннисене халăхăн çав чи лайăх ывăлĕсемшĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Сывă пултăр мухтавлă коммунисла парти—пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерӳвĕсен организаторĕ!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Сойуз Советне тата Национаљнăçсен Советне суйламали Çĕмĕрле суйлав округĕсенчи тата Национаљнăçсен Советне суйламали Вăрнарпа Йетĕрне суйлав округĕсенчи ĕççыннисен тата обшчĕствăлă организацисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлавĕ йышăннă резољуци

Сойуз Советне суйламали тата Национаљнăçсен Советне суйламали Çĕмĕрле суйлав округĕсенчи тата Национаљнăçсен Советне суйламали Вăрнарпа Йетĕрне суйлав округĕсенчи рабочисен, инженерлă техниклă работниксен, служăшчисен, колхозниксен, коммунисла, комсомол тата обшчествăлă организацисен тата ĕççыннисен обшчествисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Йетĕрне, Елĕк, Вăрнар тата Пăрачкав районĕсенчи предприйатисемпе колхозсенчи пĕрлехи пухусем халăхсен çулпуçне, пирĕн хаклă туса тата учителе Иосиф Виссарионович Сталина тата Совет Сойузĕн Геройне Валерий Павлович Чкалова Национаљнăçсен Советне депутата РСФС Республикĕнчен Горьки суйлав округĕ тăрăх суйлама кандидата палăртнине хĕпĕртесе тата савăнса хапăл тăвать.

Сталин йулташăн çывăх соратникĕсене: Совет правителствин пуçлăхне Вйачеслав Михайлович Молотова, ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателне Михаил Иванович Калинина, Йăвăр промышленнăçăн хурçă пек çирĕп Халăх Комиссарне Лазарь Моисейевич Кагановиче, Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалне—Оборона Халăх Комиссарне Климент Йефремович Ворошилова, ПСК(б)П Тĕп Комитет секретарне—Ленинград бољшевикĕсен руководителне Андрей Александрович Жданова, ПСК(б)П Тĕп Комитет секретарне Андрей Андрейевич Андрейева, Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссарне Анастас Иванович Микойана, ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссарне Влас Йаковлевич Чубаре, ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне Николай Иванович Йежова, Украинă К(б)П Тĕп Комитет секретарне Станислав Викентйевич Косиора тата Тури Ачакри „Крестьянская газет" йачĕпе тăракан колхоз председателне-орденоносец Андрей Михайлович Краснова Сойуз Советне суйлама кандидата палăртнине канашлу хĕрӳллĕн хапăл тăвать.

Çавăн пекех тата Национаљнăçсен Советне депутата суйлама кандидата Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх ПСК(б)П Çĕмĕрле райкомĕн секретарне Иван Василйевич Новикова, Йетĕрне суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Шалти ĕçсен халăх комиссарне Алексей Михайлович Розанова, Вăрнар суйлав округĕ тăрăх Мускав çар округĕн сывлăшри вăйсен начаљникне орденоносец Петр Иванович Пумпур йулташа палăртнине канашлу хĕрӳллĕн хапăл тăвать.

Ĕççыннисен представителĕсен канашлăвĕ, хăйĕн довереннăйĕсене уйăрса, вĕсене суйлав участкисенче суйлавçăсене ССР Сойузĕн Аслă Советне партипе правителствăн руководителĕсене—ССР Сойузĕнче социалисăмăн çĕнтерĕвĕсем, пирĕн тăван çĕршывăн çитĕнĕвĕсем çине тапăнма хăтланнă тăшмансене çĕмĕрсе тăкни вĕсен йачĕпе тачă çыхăнса тăракан çынсене—суйлассишĕн сасăласси пысăк телей тата савăнăç пулса тăни çинчен каласа пама хушать.

Çавăн пекех тата канашлу Андрей Михайлович Краснов коммунисла парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăни çинчен, вăл Тури Ачакри „Крестьянская газета" йачĕпе тăракан колхоза бољшевикла колхоз тăвассишĕн, колхозниксене пуйан та куљтурăлă пурăнакан тăвассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешни çинчен, çирĕп бољшевик, Çĕмĕрле районĕнче халăхăн тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринцăсене, буржуалă националиссене кăкласа пĕтерес тĕлĕшпе хăватлă кĕрешсе пыракан Иван Василйевич Новиков çинчен, Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан, социалисăм строителствинче пысăк ĕçсем туса иртернĕ, Чăваш АССР тăрăх халăхăн тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринцăсене, буржуалă националиссене кăкласа пĕтерес ĕçре çирĕп бољшевик пулнине кăтартнă Алексей Михайлович Розанов çинчен тата пирĕн социалисăмла тăван çĕршывăн пĕтĕм хăватпа ĕçлекен, социалисăмла çĕршывăн оборонине тĕреклетессишĕн кĕрешекен боец Петр Иванович Пумпур йулташ çинчен каласа пама хушать.

Канашлу ĕççыннисене пурне те хамăрăн ĕретсене бољшевиксен Ленин—Сталин партийĕ тавра, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тата тачăрах пĕтĕçтерме чĕнет.

(Picture)

Октăбĕрти Социалисăмла Аслă револљуци пулнăранпа 20 çул тултарнă тĕле.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. И. Ленин тата И. В. Сталин красногвардейецсемпе пĕрле Смољнăйра. 1917 çул. П. Василйĕв художник ӳкерчĕкĕ (Центрти В. И. Ленин музейĕ).

(Сойузфото)

Испани правителствин пуçлăхĕ Негрин Совет Сойузне саламлани

ВАЛЕНСИ, нойаберĕн 4-мĕшĕ. Испани правителствин пуçлăхĕ Хуан Негрин Социалисăмла Аслă ревољуци çирĕм çул тултарнă йатпа Совет Сойузне салам йанă.

„Совет государстви çирĕм çул тултарни,—тенĕ саламра,—уйрăмах Испанишĕн, вĕрентӳлĕ образец пулса тăрать. ССР Сойузĕ, Ленин кăтартса панă çулпа пырса, чи кĕске вăхăт хушшинчех улăпла малала кайма пултарчĕ. Сталин калама çук витĕр-курăмлă пулса халăх пурнăçне малала илсе пычĕ,—халĕ ĕнтĕ халăх пурнăçĕ идеал пурнăçа кĕнĕскер пулса тăнă историлĕ тапхăра çитрĕ.

Совет Сойузĕ çирĕм çул тултарать,—çак вăхăтра Испанире интервенцилĕ хăйар вăрçă пырать. Çавăнпа, совет строителстви калама çук пысăккăн пулса пынине тата совет пурнăçĕн ытти йенесене те пĕлсе тăрса, епĕ аслă халăха, миршĕн тата халăхсен самоуправлени ирĕклĕхĕшĕн малта пырса кĕрешекене, хĕрӳлĕ салам йаратăп".

„Совет Сойузĕ хăйĕн цивилизацилĕ халăх роље, вăл тӳрĕ кăмăлпа миршĕн кĕрешнине, ытти халăхсене хисепленине пĕтĕм Йевропăна кăтартрĕ. Çавăншăн Испани халăхĕ ăна тавтăвать, Испани правителстви Совет Сойузĕшĕн хĕпĕртет. Совет Сойузĕ, пайан епĕр вăл çирĕм çул тултарнине уйавлакан ревољуцин принципĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, пĕтĕм тĕнчери правăна, халăхсен никама пăхăнманлăхне тата ирĕклĕхне хӳтĕлекен паллăран та паллă çĕршыв пулса тăчĕ. Çавăнпа ăна Испани çеç мар, цивилизацилĕ пĕтĕм тĕнче тавтума тивĕçлĕ".

(ТАСС).

Октăбĕр ревољуци çирĕм çул тултарнă майĕпе Чехословаки рабочисем сывлăх сунаççĕ

ПРАГА, нойаберĕн 3 мĕш (ТАСС). Социалисăмла Аслă Октăбĕр ревољуци çирĕм çул тултарнă майĕпе Прагари ССР Сойузĕн полпредствине Чехословаки профсойузĕсенчен, завод комитечĕсенчен, обшчĕствăпа куљтурă тата ытти организацисенчен сывлăх сунакан çырусем нумай пыраççĕ.

Кладно хулинчи „Пољди Хӳтте" металлурги завочĕн завод комитечĕ 5.100 рабочи йачĕпе социалисăмла Аслă ревољуци çирĕм çул тултарнă майĕпе сывлăх сунса çырнă çырăвĕнче çапла çырать: Епĕр, рабочисем, лăпкă саманана чи малтан хута кĕрекенĕ пулса тăракан сирĕн пултарулă государствăпа тулли кăмăллă. Епĕр, пĕрремĕш социалисăмла государствă хăйĕн хăватлă Хĕрлĕ Çарĕпе вак халăхсене, вăл шутрах Чехословакине те тапăнма хатĕр тăракан фашисла çĕршывсене хирĕç кĕрешессинче никам çĕмĕрейми çирĕплĕх пулса тăнине вăйлăн ĕненетпĕр. Социалисăмла ревољуци çирĕм çул тултарни пиреншĕн те аслă праçвик пулса тăрать".

Чехословакири химипе—кантăк тата керамика производствин сойузĕ, Теплица—Шановрипе Оговицари (Чехин çурçĕр-хĕвеланăçĕнче) кантăк завочĕсен завкомĕсем хăйсен саламĕнче завод рабочисен пухувĕсен йачĕпе çапла çыраççĕ: „Сире Октăберти социалисăмла Аслă ревољуци çирĕм çул тултарнă майĕпе хĕрӳлĕ сывлăх сунатпăр, епĕр сире Чехословакипе ССР Сойузĕ хушшинчи туслă çыхăнува сыхлассишĕн тата çирĕплетессишĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешетпĕр, тесе шантаратпăр. Епĕр, есĕр çирĕм çул хушшинче тунă çитĕнӳсемпе тулли кăмăлă, тата сире ССР Сойузĕнче социалисăм тăвассине ĕçхалăх тăшманĕсене чăрмантарма ирĕк памастпăр, тесе сăмах паратпăр. Пĕтĕм Совет халăхне, унăн паттăрла çулпуçĕсене тата Хĕрлĕ Çара пирĕн хĕрӳлĕ салам".

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи массăлă митингсем

НЙУ-ЙОРК, нойаберĕн 3-мĕш (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи коммунисла парти социалисăмла Аслă ревољуци çирĕм çул тултарнă йатпа массăлă митингсем организацилет. Нйу-Йоркра массăлă митинг хулан 22 пин çын вырнаçакан чи пысăк залинче пулса иртет. Нйу-Йоркра йатарласа пухакан митингра нойабĕрĕн пилĕккĕмĕшĕнче Совет Сойузĕн америкăри тусĕсен обшчĕствин представителĕсем Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи Совет Сойузĕн полпредне Тройановски йулташа „ССР Сойузĕпе америкă туслăхĕн Ылттăн Кĕнекине" параççĕ. Ку кĕнеке çине Совет Сойузне социалисăмла аслă ревољуци çирĕм çул тултаракан уйав йачĕпе сывлăх сунакансем темиçе çĕр пин америкă çынни алă пуснă.

Францири коммуниссен партин Тĕп Комитечĕ Совет Сойузĕн халăхĕсене саламлană

ПАРИЖ, нойаберĕн 3-ш (ТАСС). Францири коммуниссен партин Тĕп Комитечĕ кăларакан „Йуманите" хаçат Францири коммуниссен партин Тĕп Комитечĕ Совет Сойузĕн халăхĕсене Октăбĕр ревољуци çирĕм çул тултарнă йатпа саламланине пичетлесе кăларнă. Францири коммуниссен партин Тĕп Комитечĕ „промышленнăç, йалхуçалăх, литературă, наукă тата искусствă облăçĕсенче социалисăмшăн кĕрешекен икĕ аслăлăх борец—Ленинпа Сталин генилĕ кăтартса пынипе тунă чаплă çĕнтерӳвĕсемпе Совет граждăнĕсене сывлăх сунать".

Мадридра „Совет Сойузĕн ерни"

ВАЛЕНСИ, нойаберĕн 3-мĕш (ТАСС). Социалисăмла аслă Октăбĕр ревољуци çирĕм çул тултарнă йатпа пыракан „Совет Сойузĕн ернин" кашни кунĕ Мадрид ĕççыннисем ССР Сойузне хĕрӳллĕн йуратнине кăтартать.

„Совет Сойузĕн тусĕсен обшчестви организацийĕнĕ выставкăна курма татти-сыпписăр пыраççĕ. Ĕнер Мадридри заводсен, фабриксен тата мастерскойсен рабочийĕсем выставкăна курма ушкăнсемпе пынă. Выставкăра хăйĕн чаплă ĕçĕпе Совет Сойузне делегат пулса кайма тивĕç илнĕ Испани рабочийĕ сăмах тухса каланă. Вăл кăçал май кунĕсенче ССР Сойузĕнче пулса, унта курса тĕлĕннисем çинчен каласа кăтартнă.

Испанири Коммуниссен партин Мадрид комитечĕ социалисăмла аслă Октăбĕр ревољуци çирĕм çул тултарнă йатпа чĕнӳ кăларнă. Чĕнӳре, кăçал чаплă уйава уйавласси Испанири вăрçăн чи йăвăр вăхăчĕпе тĕл килни çинчен паллă тунă. „Вăйлă тата йăвăр çапăçусем сыхараççĕ,—тенĕ ССР Сойузĕн халăхĕсене чĕнсе каланинче,—анчах епĕр хăраса ӳкместпĕр, епĕр хамăр çĕнтерессине шанатпăр, тата пире, есĕр пирĕнпе пĕрле пулни, сирĕн пример хавхалантарать."

Итали ĕçхалăхĕ республикăлă Испанипе пĕрле

ПАРИЖ, октăберĕн 30-ш (ТАСС). Фашисăма хирĕç кĕрешекен Итаљйанцăсем Парижра кăларса тăракан „Воче дељи Италиани" хаçат фашисла интервенцийе хирĕç ныракан протест йухăмĕ Италире çаплах вăйлăн пыни çинчен нумай çĕнĕ фактсем пĕлтерет.

Ку йухăм тĕрлĕ формăлă—вăрçă хатĕрĕсем тăвакан предприйатисенчи рабочисем вăрттăн саботаж тунинчен пуçласа, салтаксем Испанийе кайма уççăн тата татăклăн килĕшменни таранах.

Хаçат илнĕ сведенисем тăрăх, нумай пулмасть Реджонел Емилийара (Италин çурçĕрти хули) кĕтмен çĕртен пулнă аварипе бомбă пăрахакан 16 пысăк самољот çĕмĕрĕлнĕ. Вăл самољотсене пурне те йулашки вăхăтра йатарласа тунă цехра туса кăларнă пулнă. Хулара сарăлнă сăмахсем тăрăх, самољотсем айăпсăртран пулнипе мар, малтанах шухăшласа хурса, моторсене хăйăр сапса пăснипе, çĕмĕрĕлнĕ. Цехра нумайĕшне арĕсленĕ, нумай рабочисене ĕçрен кăларнă.

Неапољрен пĕлтернĕ тăрăх, Испанийе кайакан карап çине çар кĕртнĕ чухне салтаксем хушшинче хирĕçӳ тухса кайнă. 30 салтак Италирен тухса кайма татăклăнах хирĕçнĕ. Вăл салтаксене хăварт уйăрса илсе Неаполитан заливĕнчи утрав çине йанă. Малала вăл салтаксене мĕн тăвасси паллă мар.

Неапољре çаплах арĕслӳ пырать. Пĕр ĕрне хушшинчех хулан чылай кварталĕсенче 100 çын ытла арĕсленĕ. Вĕсене Испанири интервенципе килĕшмеççĕ, тесе арĕсленĕ.

(ТАСС).

„Массăсемпе çыхăнса тăни, çав çыхăнува çирĕплетсе пыни, массăсен сассине итлеме хатĕр пулни—акă мĕнре большевикла йертсе пырассин вăйĕпе çĕнтерейми хăвачĕ“ (Сталин)

(ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци 20 çул тултарнине уйавласа ирттерме панă лозунгсенчен)

Пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлатмала

Ĕççыннисен йышлă массисем хушшинче Сталинла Конституципе Суйлав саккунне ăнлантарас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Агитатăрсен, вулавçăсен тата беседчиксен коллективĕсем хĕрӳллĕ ĕçе тытăнчĕç. Анчах, вăл пур çĕрте те мар. Хăшпĕр çĕрте суйлав кампанийĕ ĕççыннисен политикăла активлăхне ӳстернине кура тата суйлавăн организацилĕ ĕçĕсене тунă май пропагандăла тата агитацилĕ ĕçе манăça хăварма пуçланă.

Семенкасси колхозĕнче (Тутаркас р.) суйлав саккунне вĕренме кружок организациленĕ, унта пĕр занятти те пулман. Колхозниксем суйлав саккунне тĕплĕн вĕренсе пĕлесшĕн, колхоз председателĕ И. Вйазов йулташран кашни кунах ăнлантарса пама ыйтаççĕ. Анчах вăл „епĕ хам та нимĕн те пĕлместĕп“,—тесе çак ĕçе организацилессинчен пăрăнать.

Пĕчченхыр йалĕнче (Сĕнтĕрвăрри р.) 394 суйлавçă. Вĕсем валли 13 кружок организациленĕ. Кашниннчех 4-шар занятти иртнĕ. Занятисем час-часах йачĕшĕн пулса иртеççĕ. Малтанхи занятине 108 суйлавçă, йулашкисене тата та сахалтарах пухăнчĕç. Йалсовечĕпе колхоз правленийĕ кружоксене ĕçлеме нимĕнле условисем те туса паман. Кукашни тата Йурийевкă йалсовечĕсенче те çавнашкалах.

Ӳпнер йалĕнче (Вăрнар р.) ĕççыннисене пĕрер хут пухса суйлав саккунĕ çинчен çийелтен шăйăрттарса доклад туса панă та, çавăнпа Сталинла Конституцине тата суйлав саккунне ĕççыннисене ăнлантарса парас ĕçе вĕçленĕ.

Нумай вырăнсенче суйлав саккунне вĕренмели кружоксене йединоличниксене йавăçтармаççĕ. „Йашуткă колхозĕнчи колхозниксем суйлав саккунне тĕплĕн, пысăк хастарлăхпа вĕренеççĕ. Кружока çӳрекен колхозниксем колхоз организацилеччечхи йавăр пурнăç çинчен аса илеççĕ, халь колхозра чыслă ĕçлесе нумай тырпул туса илни, телейлĕ, пуйан тата культурăлă пурнăçпа пурăнни çинчен пĕтĕм чĕрери хаваслăхпа калаçаççĕ. Анчах çак кружока пĕр йединоличника та хутшăнтарман. Суйлав саккунне вĕсем те пĕлесшĕн, вĕренесшĕн. Вĕсене йалтах манăça хăварнă. Йермошкинă йалĕнче те çавнашкалах.

Парти, комсомол, профсойуз хăшпĕр организацийĕсем тата совет оргăнĕсем йединоличниксем хушшинче ĕçлессине манăça хăварнине кура, халăх тăшманĕсем хăйсене майлă ĕçсем тума тытăннă. Халăх тăшманĕ чийе тата тискер, вăл пирĕн ĕçри пĕчĕк çитменлĕхсемпе уса курать, вăл чи тискер, чи усал ĕçсем çине куçать. Мăн Тукташ йалсоветĕнче (Елĕк р.) чиркӳ старасти Федоров Йефим йединоличниксен хушшинче совет влаçне хирĕç сăтăрла ĕçсем туса пурăннă. Ĕçкĕ-çикĕ урлă инвалидсен ертелĕн правлени председательне—Шувалова хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Шувалов халăх тăшманĕсене совет влаçне хирĕç сăтăрла ĕçсем тума укça-тенкĕ панă. Вĕсене хал çеç тăрă шыв çине кăларнă.

Темĕн чухлĕ тĕрлĕрен ыйтусем параççĕ кружоксенче вĕренекен ĕççыннисем. Суйлав саккунĕн статйисем çинчен, хăйсен пысăк прависем çинчен лайăх ăнланасшăн, тĕплĕн пĕлесшĕн вĕсем. Нумай кружоксенче ĕççыннисем паракан ыйтусене агитатăрсем çителĕклĕ ответсем параймаççĕ. „Сормово“ колхозĕнчи (Патăрйел р.) агитатăр Новикова йулташ „Мускав, Ленинград тата ытти облаçсенчи ĕççыннисем икĕ бӳллетенпе, епĕр виçĕ бӳллетенпе суйлатпăр. Мĕншĕн апла?“ тесе ыйтсан, татăклăн ответ парайман. Волкова йулташ (Тимĕш йалсоветĕнче, Йелчĕк р.) колхозниксен „Союз Советне тата Национальносен Советне суйлама депутатсене мĕнле тата ăçта тăратмала?“ тесе ыйтсан та ответ параймаи. Мăн Тукташри вулав çурчĕн пуçлăхĕ Макаров йулташ (Елĕк р.) рабочи класпа пролетариат хушшинчи уйрăмлăха сийенлĕ ăнлантарса панă.

Çак фактсем вĕсем пурте парти, комсомол, профсойуз хăшпĕр организацийĕсем тата совет оргăнĕсем агитатăрсен, беседчиксен тата вулавçăсен ĕçĕпе тивĕçлĕ йертсе пымании, вĕсене тимлĕн хатĕрлемении, çакă пысăк та ответлă ĕçе вĕсене кăна шанса пани çинчен ăнланса илменнине пĕлтереççĕ.

Пропагандăла тата агитацилле ĕçре вулав çурчĕсемпе çыхăну пайĕсен тивĕçĕ пысăк. Çапах та вĕсем хăйсен ĕçне парти ыйтнă пек туса пымаççĕ. Йермошкинă вулав çурчĕн пуçлăхĕ Чернов йулташ (Вăрнар р.) суйлавçăсем хушшинче ĕçлеме мар, илекен хаçат-журналсене тата кĕнекесене ĕççыннисене памасть. Вулав çурчĕ йаланхи пекех питĕрĕнсе тăрать. Кошкăри тата Упири пуштă уйрăмĕсем (Трак р.) октябĕрĕн 21-мĕш числинче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хаçата октябĕрĕн 26-мĕш числинче кăна валеççе панă. Районри радиоузел, йалсенчи радиоточкăсем ĕçлемеççĕ.

ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали кун çывхарса килет. Пропагандăпа агитаци ĕçне партире тăман большевиксен нумай пинлĕ массине йавăçтармала. Агитатăрсем, вулавçĕсем хăйсем Сталинла Конституципе суйлав саккунне отлично пĕлсен тин, массăна Конституцин кашни статйине, суйлавăн пĕтĕм техникине уççăн, тĕплĕн тата витĕмлĕн ăнлантарса пама пултараççĕ. Çавăнпа та вĕсене вĕрентмеле, хатĕрлемеле. Пĕтĕм пропагандăпа агитацилĕ ĕç большевикла сыхлăхпа уйрăлми çыхăнса тăмала.

Пирĕн пайанхи ĕмĕт

Епĕ — Куславкка комбиначĕн електростанцийĕнче ĕçлетĕп. Станци—комбинатăн чĕри. Заводра 1933 çултанпа ĕçлетĕп. Малтан рйадовой работница кăна пулнă. 2 çул мотористкă пулса ĕçлерĕм. Манăн пĕр авари пулман. Халĕ бригадир. Манăн бригадăра 8 çын. Нумайĕшĕ комсомолецсем. Пĕтĕм çменăна комсомолла çменă туса, ыттисене пример кăтартас, тетпĕр. Пирĕн айăппа—електростанцин кăлтăкĕсене пула комбинатра пĕр минутлăха та пулин ĕç чарăнса ларни ан пултăр. Хамăрăн çменăна комсомолла çменă тăвасси—вăл пирĕн пайанхи ĕмĕт.

Пирĕн ĕç комбинат тăрăх çеç мар, комбинат тулашĕнче те инçе сарăлать. Куславкка районĕнче 10—12 йалта „Илйич ламписем“ çунаççĕ. Вăл—пирĕн çутă. Çав йалти колхозсенчех електричествă вăйĕпе авăн çапаççĕ. Вăл—пирĕн електричествă вăйĕ.

Пирĕн ĕçре пĕр çитменлĕх пур. Вăл—рабочисене канăç вăхăтне культурăлă ирттерессине йĕркелеменни. Пирĕн цехăн хĕрлĕ кĕтес те суккă. Пухусем ирттерме те пӳлĕм тупса паман. Пĕр кино-картинăсем çеç кăтартаççĕ. Спектакльсем пулмаççĕ. Заводри комсомол комитечĕ çаксем çинчен сахал шухăшлать.

Анна Кмагина.

Манăн пысăк утăм

Епĕр телейлĕ çамрăксем. Вунсакăр-вунтăхăр çула çитнĕ çамрăксем кăçал Советсен суйлавне пирвайхи хут хутшăнаççĕ. Пур правалă гражданин тивĕçлĕхне илеççĕ вĕсем. Епĕ те çавсен хисепĕнчех. Декабĕрĕн 12-мĕшне епĕр пысăк хаваслăхпа кĕтетпĕр. Суйлав саккунне çине тăрсах вĕренетпĕр. Производствăра та аванрах ĕçлеме тăрăшатпăр.

Епĕ Куславкка комбиначĕн йавăç каскалакан цехĕнче торцовкă çинче ĕçлетĕп. Стахановкă. Хамăн нормăна 170—180 процентран кайа тултармаи. Цехра епĕ хамăн йулташпа—Кормилицинă Матренăпа ăмăртса ĕçлетĕп. Ăмăртура йаланах епĕ мала тухса пыратăп. Иртнĕ çулсенче те епĕ ударлă ĕçленĕ. Темиçе хут премисем илнĕ. 1936 çулта мартăн 8-мĕшĕнче çĕвĕ çĕлемели машин пачĕç.

Производствăра ăнăçулă ĕçленине кура, кăçал çентабĕр уйăхĕнче мана комсомола илчĕç. Ку—манăн пит те пысăк утăм. Ĕнтĕ политикă тĕлĕшĕнчен хытăрах вĕренме тытăнатăп.

Стахановла ĕçлесси вăйлансах пымала, анчах ку тĕлĕшпе пире цехри руководителĕсем çителĕклĕ пулăшмаççĕ. Час-часах ĕççĕр тăраççĕ. Тепĕр чухне станок çинче çуркун ĕçлетĕн те, ытти вăхăтра, пушă тăрасран, туса кăларнă продукцине йĕркелесе ирттеретпĕр.

Петухова Вера.

Ачасем çураласси икĕ хут ӳснĕ

Республикă столицинче — Шупашкар хулинче халăх йышĕ уйăхсерен ӳсее пырать. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче, 1936 çулхи çав вăхăтпах танлаштарсан, çĕнĕрен çуралакансем шучĕ 2 хут ӳснĕ. Сăмахран, 1936 çулхи сентабĕр уйăхĕнче хулара 44 ача çуралнă пулсан, кăçалхи сентабĕрте 77 ача çуралнă.

Участкăсенчи суйлав комиççисен канашлăвĕ

ПĂРАЧКАВ (хамăр корреспондентран) Нойабĕрĕн 4-мĕшĕнче Пăрачкавра районри участкăсенчи суйлав комиççисен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура 220 çын пулчĕ.

Канашлу участкăсенчи суйлав комиççисен умра тăракан задачисем çинчен сӳтсе-йаврĕ. Улатăр округĕнчи Союз Советне суйламали суйлав комиççин председателĕ Кузьмин йулташ хăйĕн сăмахĕнче уйрăмăнах агитацилĕ-массăлă ĕçе анлăн сарса пырса, суйлавçăвене суйлавсене пур йенчен те çителĕклĕн хатĕрлесе çитермели çинчен, кандидатсене вăрттăн сасăлама суйлав çурчĕсем, вĕсенче пӳлĕмсем хатĕрлесе çитересси çинчен хыттăн паллă туса каларĕ. Кузьмин йулташ кандидатсене йепле йĕркепе сасăласси тата сасăланă хыççăн результатсене мĕнле шутласа кăларасси çинчен те тĕплĕн каласа пачĕ.

Канашлу участкисенчи суйлав комиççисен председателĕсенчен çак ответлăран та ответлă политикăла пысăк задачăна кирлĕ пек пурнăçлама ыйтрĕ.

Клопов.

Суйлава хатĕрленеççĕ

* * Çак кунсенче Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинчи постройкомăн пленумĕ пулса иртрĕ. Унта строителствăри рабочисем хушшинче ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали куна мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен сӳтсе-йаврĕç. Пленумра тухса калаçакансем пурте суйлав кунне хатĕрленесси йапăх пыни çинчен калаçрĕç. Профсойуз работникĕсем ку ĕçпе çителĕклĕ таран ĕçлемен, Положенине вĕренессине те кирлĕ пек тытăнман.

4-мĕшпе 5-мĕш участкăсенче партком йанă агитатăрсем рабочисемпе калаçусем тунă, анчах та çийелтен çеç ăнлантарса панă. Строителствăна кашни кунах рабочисем килсе тăраççĕ, вĕсене Положенине вĕрентме йавăçтарман.

Йаркунькин.

* * Мăн Хăмарка йалсоветĕ (Хĕрлĕ Чутай р.) суйлавçăсене суйлав саккунне вĕрентес тĕлĕшпе 28 агитатăр уйăрнă. Вĕсене кашнине 10 кил хушшине çирĕплетнĕ. Агитатăрсем пурте ĕçе тытăнчĕç.

Долгов.

* * Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Уйпуç йалсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем суйлав кунне пысăк хаваслăхпа кĕтеççĕ. Суйлав саккунне тăрăшса вĕренеççĕ. Хут пĕлменнисене вĕрентме тытăнчĕç.

Е. Самарин.

* * Анаткас Уçырмари „Производител“ (Канаш р.) промколхозра суйлав саккунне кашни килте вĕренес ĕçе организациленĕ. Колхозниксен килĕсене кайса Канашри финтехникумран килнĕ 9 агитатăрпа йалти комсомолецсем суйлав саккунĕ çинчен каласа параççĕ.

И. Данилов.

Комсомолецсен бригади

Чукунçул строителствинче рельсăсем хывнă çĕрте ĕçлекен Тарасов комсомолец йертсе пыракан бригадăн ĕçĕнче, пурнăçĕнче кунран кун çĕнĕ те паха йăласем çирĕпленсе пыраççĕ. Октябĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ стахановла вунăкунлăха хатĕрленнĕ май бригадăри çынсем пур те ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç. Ăмăрту итогĕсене кулленех шута илсе тăнă. Çавна пула вунăкунлăх хушшинче кашни кун нормăна 150 процентран кайа мар тултарса пынă.

Вунăкунлăх иртсен бригадă Октябĕр уйавне пысăк ӳсĕмсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешме тухрĕ. Нормăна тултарса пынипе пĕрлех обчăлăх ĕçĕнче паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Бригадăра хор кружокĕ организациленĕ. Халĕ кружок çĕнĕ йурăсем вĕренет. Комсомолец Кузнецов ĕçлекен хĕрлĕ кĕтесре кашни кунах хаçатсемпе журналсем вуласа ирттереççĕ. Кунта кашни комсомолец хăйĕн ĕçне тăвать. Бычков осоавиахим организацинче йертсе пырать. Илларионăвпа Пушков комсомолецсем рабочисем хушшинче хаçат-журналсем вуласа параççĕ.

Аслă Совета суйламали куна лайăххăн хатĕрленнипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Комсомолецсем хушшинче политкружок тата Суйлав Положенине вĕренмели кружок ĕçлет. Вĕсемсĕр пуçне кашни кун пухăнса хаçатсем çинчен кирлĕ материалсене вĕренеççĕ.

Хĕле хатĕрленнĕ май вагонсене ăшăтса йусаса пĕтерне. Халĕ бригадă çыннисем ăшă вагонсенче таса вырăнсем çинче выртса тăрса пурăнаççĕ.

Мускавра Аслă Совет суйлавне ирттерме çуртсем хатĕрлесси хĕрӳллĕн пырать.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 44 № суйлав участкин кабинĕсем. Унта суйлавçă бӳллетенсене тултармала.
А. Грибовски фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото)

Шупашкарти суйлав участкисенче

Шупашкар хулинче пĕтĕмпе 15 суйлав участки тунă. Ку участкăсенче суйлавçăсем валли 150 кабинă туса хатĕрлемеле. Пайанхи куна суйлав участкисенче çуртсене пăхса тухнă, кабинăсен образецне çирĕплетнĕ. Вĕсем пурте пĕр формăпа пĕр пек пулаççĕ. Кабинăсене тума кивĕ мунчара уйрăм мастерской организациленĕ, ку ĕçе тума тытăннă та. Декабĕрĕн 7-мĕшне туса пĕтереççĕ. Кашни суйлав участкинчех телефонсем пур. Бӳлетенсем йамали суйлав йешчĕкне Çĕмĕрлери комбинатра туса хатĕрлеççĕ.

Суйлав участкисенче суйлав комиççин председателĕ йе секретарĕ валли уйрăм пӳлĕмсем тунă. Вĕсем суйлав участкисене суйлав кунне хатĕрлеççĕ.

Суйлав участкисем чылайĕшĕ шкулсенче, учрежденисенче пулнă пирки, хатĕрленӳ ĕçне тума чăрмантарса пырать. Учрежденисене, шкулсене ĕçлеме чармала мар, суйлава та хатĕрленмеле. Максим Горький, Крупскайа йачĕпе тăракан шкулсенче, строителсен клубĕнче, Кооптехникумра суйлавччен икĕ кун малтан, ытти шкулсенче, тата Учрежденисенче: Чăвашторг, Чăвашкино, Кульсойуз, Пичет çурчĕ, Садвинтрест совхозĕ, Боль[illegible]ăсенчи суйлав участкисене декабĕрĕн 11-мĕшĕнче каçхине хатĕрлеме тивет. Çавăнпа та кунта хăвăрт ĕçлени кирлĕ.

Кашни суйлав участки валли суйлавçăсен спискисене çапма щчитсем туса хатĕрленĕ: нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче ку спискăсене çакаççĕ. Суйлавçăсен спискисене алфавит тăрăх туса хатĕрленĕ. Анчах кунта йăвăрлăх чылайах. Суйлавçăсен списки кашни кун улшăнса пырать. Сăмахран нойабĕрĕн 1—2-мĕшĕсенче Шупашкар хулине 150 çын килсе вырнаçнă, çав вăхăтрах Шупашкартан 200 çын тухса кайнă. Çак кунсенчех участкăран участкăна 100 çынна йахăн куçнă.

Шупашкарти хула совечĕ кашни участкă валли уйрăм план туса хатĕрленĕ. Ку план çинче суйлав комиççи председателĕн, суйлавçăсен сасăламали пӳлĕмĕсене, ачасен пӳлĕмĕсем хăш вырăнта пулассине пĕтĕмпех кăтартнă.

Ачасен пӳлĕмĕсем кашни участкăрах пулаççĕ.

Санитарипе гигийенă таварĕсене нумай илеççĕ

Пирĕн республикăри халăх пурнăçĕ çулран çул лайăхланса пырать. Çавна май халăх санитарипе гигийенă таварĕсене—духи, одеколон, тутлă супăнь, шăл чӳхемели порошок, т. ыт. те ытларах илме пуçлать. Çакна Чăваш аптекă управленин тĕп аптекăри тата симĕс пасарти ларйокĕсен ĕçĕнчен те лайăх курма пулать. Вĕсем 1936 çулта çӳлте асăннă таварсене 200 пин тенкĕлĕх сутнă пулсан, кăçалхи 10 уйăх хушшинче вăл таварсене 300 пин тенкĕлĕх сутнă.

Иртнĕ çулта сентабĕр уйăхĕнче санитарипе гигийенă таварĕсем 19.868 тенкĕлĕх сутăннă, кăçалхи сентабĕр уйăхĕнче 36.415 тенкĕлĕх, октябĕрте — 41.034 тенкĕлĕх сутăннă.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителстви

Ăмăртăва анлăн сарса пырар

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула пĕтерме правителствăпа Çулйĕр халăх комиссариачĕ палăртнă срук çывхарса çитрĕ. Анчах туса пĕтермен ĕçсем чылай-ха. Çĕр ĕçне тата кĕперсемпе трубасене нойабĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермеле пулнă. Нойабĕрĕн 4-мĕшĕ тĕлне çĕрĕçне тăвас плана 87 проц., тимĕрпе бетонран кĕперсем хывассине 84 проц., йавăç кĕперсем тăвассине 73 проц. çеç тултарнă.

Строителствă планне вăхăтра тултарма пур кирлĕ условисем те çителĕклĕ пулчĕç. Çу тата кĕр лайăх тăчĕ. Парти Обкомĕпе правителствă куллен пулăшса пычĕç. Республикри Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Йетĕрне тата Йелчĕк районĕсенчи колхозниксем çула вăхăтра туса пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешрĕç. Строителствăра пысăк ĕçтухăçлăхĕ паракансем те сахал пулман. Патăрйел районĕнчи „Правда“ колхоз членĕ Тарасов йулташ нормăна 220 процент, Алексей Дорожкин плотник 280 проц., Иван Алексейев йертсе пыракан плотниксен бригади 280 процент тултарать. Кунашкал ĕçлекенсем татах та нумай.

Анчах мĕншĕн-ха строителствă ĕçĕ вăрăма чăсăлчĕ? Кунашкал пулни чукунçул управленийĕ, прорабсем колхозниксен производствăлă çĕкленӳпе уса курма пĕлменнинчен, механизмсемпе автотранспорт ĕçĕсене йĕркелеменнинчен, ĕç вăйне строителствăра çирĕплетменнинчен тата Канаш, Шăхасан, Трак, Çĕрпӳ, Ишлей районĕсенчи руководителĕсем стройкăра ĕçлеме колхозниксемпе йединоличниксене организацилеме пултараймаиннинчен килсе тухнă.

Строителствăри руководителĕсен политикла макалăхне, йăваш чунлăхне пула строителствăра пире йут елементсем: 3-мĕш участкăри прораб пулнă Дашков, 2-мĕш участкăри прораб пулнă Федоров сăтăрла ĕçсем туса пынă. Вĕсем сăтăрла ĕçсем туни çинчен систерӳсем те вăхăтра пулнă. Анчах ку систерӳсенчен строителствă начальникĕ Вавилкин, партипе профсойуз организацисем çийĕнчех татăклă вывăдсем тăваймаи. Сăтăрçăсен йулашкийĕсене пĕтерессишĕн, тăшманла елементсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе халĕ те çине тăрса ĕçлени палăрмасть-ха. Октябĕрĕн йулашки кунĕсенче пулса иртнĕ стахановецсен слетĕнче ку уççăнах палăрчĕ. 3-мĕш участкăри прораб помощникĕ Петров хăйĕн ĕçне пур чухне те рабочисем хушшинче хирĕçӳ кăларас, рабочисене тарăхтарас май туса пырать. Акă пĕр факт: пĕрре екскаватăр çинче ĕçлекенсене мунча кĕме йала пыма пĕлтернĕ. Рабочисем пырсан Петров вĕсене 17 мунча патне илсе çитернĕ. Сăкăр тата продукцисем вăхăтра тăратмасăр рабочисене 7 километр çӳреттерни те пĕр хут çеç пулман.

Виççĕмĕш участкăри мастăрсем учот ĕçне йапăхтарса йанă. Тунă ĕçе куç виçипе кăна шута илеççĕ. 5-мĕш участкăри десатник Полонски нарйадсем памасăр ĕçлеттерет. Унта рабочисем хăйсем мĕн чухлĕ ĕçленине пĕлмеççĕ. Работниксем хушшинче ĕç дисциплини сӳрĕк. Кунашкал йĕркесĕр ĕçлени çинчен пур участкăсенчен те систерӳсем пулнă. Анчах стройкăри партипе профсойуз организацисем, руководителĕсем ку систерӳсем çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ йалавне илме тивĕçлĕ пулнă Куславкка районĕнчи колхозниксем республикри колхозниксене чукунçула хăвăрттăн туса пĕтерессишĕн ăмăртăва тухма чĕнчĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозниксем ăмăртăва хутшăнса чукунçул тума йышлăн тухма тытăнчĕç. Ку ăмăртăва пур районсенчи колхозниксем хушшинче те анлăн вăйлатса пымала. Комсомол организацисен комсомолăн облаçри XIV-мĕш конференцийĕ йышăннине пурнăça кĕртмеле. Çапла тусан чукунçула Аслă уйав—суйлав кунĕ тĕлне туса пĕтеретпĕр.

Хаçат-журналсене ытларах сарар!

(Елĕк районĕнчи почтă çӳретекенсен, „Чăваш Коммунĕ“ хаçата вулакансен, колхозри стена хаçат редакторĕсен, йалкорсен Чăваш республикĕнчи çыхăну йенĕпе ĕçлекенсем патне панă чĕнӳвĕ).

Халăх хушшинче хаçат-журналсем ытларах сарас, кашни ĕççынни патне суйлав саккунне çитерес тĕлĕшпе çыхăну йенĕпе ĕçлекенсем çине пысăк политикăла ответлăх тивет.

Хаçат-журналсем сарасси—çыхăну йенĕпе ĕçлекенсен чи хисеплĕ ĕçĕ пулать. Хальхи тапхăрта ССР Союзĕн Аслă Советне депутатсем суйлас кампани пынă вăхăтра ку задачă политикă тĕлĕшĕнчен питех те пысăк вырăн йышăнать. Çапла пулин те, ку ĕç пирĕн районра, çавăн пекех ытти районсенче те, йапăх.

Пирĕн районра Горин, Ландышев, Воинов тата ытти почтальонсем лайăх ĕçлесе, хаçат-журнал сарас плана 120—150 процент тултарнă. Вĕсем хаçат-журналсене вулакансем патне вăхăтра çитерсе параççĕ. Çав вăхăтрах хаçат-журнал сарас плана 32—45 процент çеç тултарнă почтальонсем те пур-ха. Ку шутра Йашуткин, Николайев тата Кириллов йулташсем тăраççĕ.

Епĕр, Елĕк районĕнчи çыхăну йенĕпе ĕçлекенсем, Октябĕр уйавĕ умĕнхи, тата суйлав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, нойабĕрĕн 1-мĕш тĕнле „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра 1000 екземпляр, „Красная Чувашия“ 700 екз., „Çамрăк колхозник“ 500 екз., районри хаçата 3000 екз., „Колхозник“ журнал 100 екз., „Безбожник“ журнал 150 екз., „Крестьянка“ журнал 100 екз., „Спутник коммуниста в деревне“ журнал 120 екземпляр сарма пултăмăр.

Çак тĕлĕшпе епĕр Чăваш республикĕнчи пур районсенчи çыхăну йенĕпе ĕçлекенсене пурне те социалисăмлă ăмăртăва чĕнетпĕр. Çĕнĕ суйлав саккунне кашни суйлавçă патне çитерер.

Хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе „Хаçат-журналсăр пĕр ĕççынни те ан пултăр“ тенĕ лозунг тăрăх ĕçлер.

Конференци Президиумĕ.

Кивӗ Российӑ чухӑн тата вӑйсӑр пулнӑ. Совет Союзӗ ҫирӗм ҫул хушшинче хӑватлӑ тата халӑх тулӑх пурӑнӑҫпа пурӑнакан социалисӑмлӑ ҫӗршыв пулса тӑчӗ. Сывӑ пултӑр пирӗн Окт̆абӗрти, ССР Союзӗнчи халӑхсене телей панӑ револђуци!

(ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ Окт̆абӗрти Социалисӑмла Аслӑ револђуци 20 ҫул тултарнине уйавласа ирттерме панӑ лозунгсенчен)

Кат̆ӑ Окт̆абӗрпе пӗрле ҫуралнӑ

ВӐРНАР (хамӑр корр.). Кат̆ӑ Илларионова 1917 ҫулта Окт̆абӗрпе пӗрле ҫуралнӑ. Кат̆ӑ ҫуралсан виҫӗ ҫула ҫитсенех ашшӗпе амӑшӗ вилнӗ. Ҫамрӑк Кат̆ӑна йалти чухӑн Лаврентий Йегорчӑ хӑй патне усрама илнӗ.

9 ҫулхи Кат̆ӑна Лаврентий Йегорчӑ Ҫӗнйал Хапӑс йалӗнчи кулак патне ӗҫлеме панӑ.

Сергей кулак Кат̆ӑна пӗр пуссӑр кунӗн-ҫӗрӗн, типӗ ҫӑкӑр ҫитерсе хӑйӗн йышла выђӑх-чӗрлӗхне пӑхтарнӑ. 10 ҫулхи Кат̆ӑ хӑйӗн ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирӗпех сивӗ ҫӑмӑр айӗнче, кулак выђӑх-чӗрлӗхне пӑхса ҫӳренӗ.

Кат̆ӑ йаланах Лаврентий мучӗшӗ патне кайса, чи йӑвӑр нушаран хӑтарма йӑлӑнса макӑрнӑ.

Лаврентий Йегорчӑ хӑй те пысӑк нушалӑхра пурӑннӑ пирки, Кат̆ӑна нушаран хӑтарма пултараймаи. Хӑйте йалти пуйансен пусмӑрӗнче пулнӑ.

1930 ҫул, Мамалай йалӗнчи чухӑнсем колхоз организациленӗ.

Кат̆ӑ хӑйсен йалӗнче колхоз тунине илтсенех, колхоза кӗме Лаврентий мучӗшӗпе пӗрле ыйту панӑ.

Колхозниксем Лаврентий Йегорча та Кат̆ӑна та хапӑл тусах йышӑннӑ.

Кат̆ӑ йун ӗҫсе пурӑннӑ кулак аллинчен ӗмӗрлӗхе хӑтӑлнӑ, унӑн савӑнӑҫлӑ кунсем пуҫланнӑ. Кат̆ӑ колхозра йаланах тӑрӑшса, хӗпӗртесе, савӑнса ӗҫленӗ, ҫавӑнпа та ӑна ытти колхозниксем, колхозницӑсем „паттӑр Кӗтерне" тесе чӗннӗ.

Кат̆ӑна колхоз правлени йаланах тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн сурӑх тирӗнчен пӗр кӗрӗк ҫӗлетсе панӑ тата темиҫе хутчен те премисем панӑ. Ӑна 1935 ҫулта, колхоз ҫумӗнчи комсомол организаци комсомола илет. Кат̆ӑ комсомол организацинче чи активлӑ комсомолкӑ шутланнӑ. Вӑл хӑй пек ҫамрӑк хӗрсене Аннапа Йеленана комсомола кӗме пулӑшнӑ.

Кат̆ӑ, Аннӑ тата Йеленӑ политкружока пӗр сиктермесӗр ҫӳренӗ.

Пропагандис пӗр занђатинче колхозсен уйхирӗсенче трактӑрсен йышӗ ӳссе пыни ҫинчен каласа панӑ. Кат̆ӑн пуҫӗнче ҫак занђатинчен трактӑр ӗҫне вӗренсе, унпа ӗҫлес шухӑш пуҫланнӑ. Колхоз правленипе комсомол организаци ӑна Вӑрнар МТСтанцине трактӑр курсне йама йышӑннӑ. Вӑл трактӑр курсне „хорошо" паллӑпа вӗренсе пӗтернӗ. МТСтанцин директӑрӗ ӑна 15 ш трактӑр бригадине трактӑрпа ӗҫлеме йанӑ.

Пӗррӗмӗш хут трактӑр ҫине ларсан МТСтанци директӑрӗ Гусев йулташ: Ну, Кат̆ӑ, асту, лайӑх тӑрӑшса ӗҫле, йулташсенчен ан йул, трактӑра йуратни анчах кирлӗ, вара ӗҫ тухатех тесе каланине епӗ хамӑн ӗмӗрӗмре те манас ҫук, тет Кат̆ӑ.

Кат̆ӑ пӗррӗмӗш ҫул трактӑр ҫинче ӗҫлет пулсан та, вӑл хӑйӗн трактӑрӗпе 505 гектар сухаласа 606 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Вӑл 1515 тенкӗ укҫа, 430 пӑт тырӑ тата пахча ҫимӗҫӗсем 100 пӑт ытла илет.

Халӗ Окт̆абӗр уйавӗ кунне ваљђи Кат̆ӑ 500 тенкӗлӗх ытла тӑхӑнмали йапаласем туйаннӑ.

— Ҫитес суйлавра, хама нушаран хӑтарнӑ, телейлӗ, савӑнӑҫлӑ пуйан пурнӑҫ туса панӑ аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташшӑн тата коммунисен парти панӑ кандидатсемшӗн хамӑн сасса паратӑп, тет Кат̆ӑ.

Ейзенбраун.

Колхоз хӗрарӑмӗ

ЙЕТӖРНӖ. Пушнарти Мичурин йачӗпе тӑракан колхозри колхозницӑ Йевдокийа Соловйова 1895 ҫулта ҫуралса, Окт̆абӗрти Аслӑ Социалисӑмлӑ револђуциччен пурнӑҫне хурлӑхпа нуша курса ирттернӗ. Тырӑ ҫиме ҫитмен, тумтир тавраш ӗ пулман.

Йалти Йегор Михайлов, Петр Стољаров, Михаил Белов кулаксем патӗнче кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр виҫтӑват пусшӑн канмасӑр ӗҫленӗ. Вӗсен тыррине те вырнӑ, авӑнне те ҫапнӑ тата ытти ӗҫе те тунӑ. Ҫапах та тӑраниччен ҫиме тырри ҫитмен, ҫийе тӑхӑнма тумтирӗ те пулман.

Унӑн ашшӗ-амӑшӗнчен йалти кулаксем мӑшкӑласа кулва ҫеҫ пурӑннӑ.

— Хӗрарӑм унчухне ҫын вырӑнче марччӗ. Ҫӗр валеҫнӗ чух та, пухура та пуйансем ҫеҫ каласнӑ. Чухӑнсене унта-кунта ҫырма шӑтӑкне, тӑмлӑ сӑрт ҫине ҫеҫ ҫӗр парса хӑваратчӗҫ. Ҫитменни ҫине хӗрарӑмсене ҫӗр те памасчӗҫ. Хӗрарӑмсем халђхи пек, пухусенче каласма пултараймаи, вӗсем пухува ҫӳремен. Ӗлӗкхи пурнӑҫ ҫинчен шутласан макӑрсах йамала,—тет Соловйова колхозницӑ.

Халђ унӑн авторитечӗ ӳсет. Ӑна халђ пурте саваҫҫӗ, пурте йуратаҫҫӗ, ырлаҫҫӗ.

— Пирӗн колхозри ӗҫ паттӑрӗ, ӗҫ организатӑрӗ,—теҫҫӗ ӑна Мичурин йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсем.

Халђхи вӑхӑтра вӑл йалсоветпа колхоз правлени членӗ. Йалсовет членӗнче виҫҫӗмӗш ҫул ӗҫлет ӗнтӗ. Йалсовечӗ хушнӑ ӗҫсене вӑхӑтра туса пырат̆. Вӑл обчалӑ ӗҫре активлӑ хутшӑнса ӗҫлет. Пур ҫӗре те ҫитет, пур ӗҫе те ӗлкӗрет.

1935 ҫулта колхозник-ударниксен крайри II мӗш сйесӗнче пулнӑ. Ӗҫре лайӑх йертсе пынӑшӑн, паха ӗҫленӗшӗн, ӗҫ нормине ытлашшипех тултарса пынӑшӑн Соловйова 6 хутчен преми илнӗ.

Соловйовӑн Ванђӑ йатлӑ ывӑлӗ Йетӗрнери педучилищӑра 9 мӗш класра, Санђкӑ 6-мӗш класра вӗренеҫҫӗ.

Соловйова йулташ Национаљнӑҫсен Советне суйламали Йетӗрне округӗнчи суйлав комиҫҫин членӗ пулма тивӗҫлӗ пулчӗ.

— Халђ епӗр телейлӗ те пуйан пурнӑҫра пурӑнатпӑр. Кусем пӗтӗмпех Сталин йулташ тӑрӑшнипе пулчӗҫ. Кунашкал ырӑ пурнӑҫа епӗ ӗлӗк тӗлӗкре те курман. Спасибӑ Сталин йулташа пире телейлӗ, савӑнӑҫлӑ, кулђтурлӑ та пуйан пурнӑҫ туса панӑшӑн! Партипе правителствӑ пирӗншӗн тӑрӑшат̆. Епӗр ҫакӑншӑн ӗҫпе ответлеме кирлӗ. Ӗҫ нормине ытлашшипех тултарса, паха ӗҫлесе пымала.

Ман ҫине халђ ответлӑ та пысӑк ӗҫ хунӑ. Кунта епӗ бољшевикла ӗҫлетӗп. Суйлава Сталин йулташ кӑтартнӑ пек, „ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйламали Положени" кӑтартнӑ тӑрӑх ирттеретпӗр. Тӑшмансене совета лекме ирӗк памастпӑр. Вӗсемпе епӗр хайарран кӗрешсе пыратпӑр, тӗпӗ-йӗрӗпех пӗтерессишӗн ӗҫлетпӗр,—тет Соловйова йулташ.

Ник. Цветков.

Йалӑн пуйанлӑхӗпе кулђтурлӑхӗ ӳсет

ВӐРНАР. 20 ҫул авал Ҫӗпрел йалӗ халђхи пурнӑҫ ҫинчен тӗлӗкре те курма пултарайман. Окт̆абӗр револђуци пулсан тин йала ҫутӑ пурнӑҫ килсе кӗчӗ. Револђуци пулнӑранпа ҫулран ҫул ытларах вӗренме пуҫларӗҫ. Йалти хресченсен пурнӑҫӗ те йалтах улшӑнчӗ, чухӑн хресченсем колхоза пӗрлешсе телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑчӗҫ. Пуйан та кулђтурӑлӑ пурӑнма пуҫларӗҫ. 20 ҫул ӗлӗкрех ҫамрӑксен савӑнасси урамра харкашнинче йе ӗҫкӗсенче ҫеҫ пулнӑ.

Йалта хут пӗлекенсем 2 ҫынтан ытла пулман. Чылайӗшӗ хура пӳртре пурӑннӑ. Ҫӗр ҫынран 90 ҫын трахомпа асапланнӑ. Халӗ йалта трахомлисем 52 ҫын, вӗсене те Окт̆абӗр уйавӗ тӗлне сыватса ҫитереҫҫӗ.

Револђуци пулнӑранпа нумай ӑстаҫӑсем вӗренсе тухрӗҫ: зоотехник 1 ҫын, учител 10, выђӑх тухтӑрӗсемпе фелђдшӗрсем 2, трахработник 1, шофер-трактористем 5, аслӑ шкул вӗренсе тухнисем 2 ҫын, техникум пӗтернисем 11 ҫын тата тӗрлӗ шкулсенче вӗренекенсем 13 ҫын.

Йалта туллимар вӑтам шкул пур. Унта ҫулсерен 280—300 ача вӗренет. Кулђтурӑлӑ фронтра ӗҫлекенсен шучӗ малама ҫук пысӑк. Учителсем, кулђтурӑ секци членӗсем, стена хаҫат редактӑрӗсем, тӗрлӗрен кружок руководителӗсем 110 ҫын шутланаҫҫӗ. Шкул ҫумӗнче тӗрлӗрен кружоксем пур. Аслӑ Окт̆абӗр уйавӗ 20 ҫул тултарнӑ тӗле шкул ҫумӗнчи драмкружок хӑйӗн вӑйӗпе, „Айдар" драмӑна выђаса пама хатӗрленет.

Колхозра пурӗ 201 хуҫалӑх шутланса тӑрат̆. Кашни киле тенӗ пекех хаҫат килсе тӑрат̆, колхозниксен килӗнче чечексем ҫитӗнеҫҫӗ, портретсем пӳрте илемлетеҫҫӗ. Ӗлӗкхи вӑхӑтра сӑмаварсем, занавескӑсем, сехетсем сайра хутра ҫеҫ пулнӑ пулсан, халӗ вӗсем кашнин пекех пур.

Ҫӗпрел ӗҫҫыннисем Аслӑ Совета суйлама тимлӗн хатӗрленеҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе колхозра йатарласа тунӑ 6 кружок ӗҫлет. Аслӑ Совета суйламали Положенине тимлӗн вӗренсе, чи пултарулӑ бољшевиксене Аслӑ Совета суйлама хатӗрленеҫҫӗ.

Колхоз кӑҫал хӑйӗн уйхирӗсенчен пысӑк тупӑш пухса илчӗ. Колхозниксем кашни ӗҫкунӗ пуҫне 8 килограм тӗштырӑ илеҫҫӗ.

Хавасла та савӑнӑҫлӑ, пуйан та кулђтурӑлӑ пурнӑҫпа кӗтсе илет Ҫӗпрел йалӗ Окт̆абӗр револђуци 20 ҫул тултарнӑ уйава.

Аф. Шморкин.

Окт̆абӗрти Аслӑ Социалисӑмлӑ револђуци 20 ҫул тултарнӑ тӗле. ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: 1917 ҫулхи Окт̆абӗр кунӗсенче Петроградра пулнӑ красногвардейецсен пикечӗ.

(Союзфото)

Уйӑп Мишши

Ҫунатлӑ ҫӗршыв

Пурҫӑнпа чӗнтӗрлет-и хӗвел ир ҫинче
Тухӑҫри пӗлӗтсен хӗррине—
Пит ҫӳлтен, кӑнкӑвак инҫет ирӗкӗнчен
чен
Еп илтеп моторсен йуррине.
Савӑнса хӗвелпе ҫутӑлаҫҫӗ сӑнсем,
Йурӑпа ҫӗкленетҫке чӗрем.
Ҫунатланнӑ ҫӗршыв! Ҫунатланнӑ ҫынсем
Чи телейлӗ, мухтавлӑ ӗҫре.

Ҫӳлерех вӗҫӗр, сут ҫунатсем, ҫӳлерех!
Ҫӗклӗр аслӑ ҫӗршыв хӑватне!
Аслӑ Сталин тытат̆ пирӗн сут ҫулйӗре
Чаплӑ ирӗк ҫут пурнӑҫ патне.

Ан ӑмсантӑр тӑшман кӗме пӗр утӑма
Ҫӗршыва, йунлӑ шухӑшпалан.
Хамӑр ирӗкшӗн, хамӑр ҫӗршывшӑн тӑма
Пӗр ҫын пек епӗр хатӗр йалан.
Кӑнтӑртан пӑрлӑ тинӗссене ҫитиччен,
Анӑҫран инҫе тухӑҫ таран
Ман мухтавлӑ ҫӗршывӑм, иртсе пуриччен
Ес ҫӗнми вӑйхӑватлӑ тӑран.

Ҫӳлерех вӗҫӗр, сут ҫунатсем, ҫӳлерех!
Ҫӗклӗр аслӑ ҫӗршыв хӑватне!
Аслӑ Сталин тытат̆ пирӗн сут ҫулйӗре
Чи телейлӗ ҫут пурнӑҫ патне.

Ҫӗршыв паттӑрӗсем полђус урлӑ иртеҫ,
Ҫын ҫитмен ҫӗрсене ӑратса.
Мӗлйуншар чӗресем савӑнса хӗпӗртеҫ,
Вӗсене, ҫӗршыва йуратса.
Йуратат̆пӑр ҫавна, кам кӑтартрӗ пире
Пурнӑҫра ӗмӗрсен ӗмӗтне,—
Сталина саламлатпӑр. Мӗн пур тӗнчере
Йалав турӗ ӗҫҫын ун йатне.

Ҫӳлерех вӗҫӗр, сут ҫунатсем, ҫӳлерех!
Ҫӗклӗр аслӑ ҫӗршыв хӑватне!
Аслӑ Сталин тытат̆ пирӗн сут ҫулйӗре
Чи телейлӗ ҫут пурнӑҫ патне.

Ситрӗ ҫын ӗмӗрте курнӑ сут ҫуркунне.
Тӑчӗ ҫӗрӗн чӑп тивӗҫ хуҫи,
Чӗререн саламлат̆ вӑл хӗвеллӗ кунне,
Аллинче унӑн — пурнӑҫ уҫҫи.

Йан кайаҫ йурӑсем ҫӗршывра ӗҫлӗ ир,
Ӗҫлеме, савӑнмашкӑн чӗнсе.
Ҫунатланнӑ ҫӗршыв! Ҫунатланнӑ епир—
Аслӑ Сталин ӳстернӗ ҫынсем.

Ҫӳлерех вӗҫӗр, сут ҫунатсем, ҫӳлерех!
Ҫӗклӗр аслӑ ҫӗршыв хӑватне!
Аслӑ Сталин тытат̆ пирӗн сут ҫулйӗре
Сутӑ чаплӑ коммунӑ патне.

ОПЫТНИК

ЙЕПРЕҪ. „Заветы Ильича" колхоз членӗ Димитрий Степанов опытник пулса ӗҫлет. Рекордлӑ тырпул звенине йертсе пырат̆.

Димитрий Степанов вӑйлӑ тырпул туса илессипе чылай паха ӗҫсем кӑтартат̆. Кӑҫал вӑл тӗрлӗ кулђтурӑсемпе опыт туса пӑхнӑ. Опыт тунӑ вырӑнта, агротехникӑла ӗҫсене ҫирӗп пурнӑҫласа пынипе кӗрхи тулӑ гектартан 45 центнер тухнӑ, опыт туман вырӑнтан кӗрхи тулӑ гектартан 10 центнер кайарах, 35 центнер тухнӑ. Йаровизацилесе лартнӑ „Вољтман" текен суртлӑ ҫӗрулми пысӑк тухӑҫ панӑ, гектартан 1800 пӑт тухнӑ. Кунсӑр пуҫне рекордлӑ тырпул участкинчен пысӑк тухӑҫ илни тӗлӗнтерет. „Лютесценс — 062" текен суртлӑ ҫурхи тулӑ гектартан 50 центнер тухнӑ. Кун чухлӗ тухӑҫ „Заветы Ильича" колхоз уйӗнче нихӑҫан та пулман. Агротехникӑлӑ ӗҫсене вӑхӑтра пурнӑҫласан „Заветы Ильича" колхоз уйӗнче те гектартан 40—50 центнер тырӑ туса илме май пурри куҫ умӗнчех. Ку тӗлӗшпе опытник Димитрий Степанов акӑ мӗн калат̆:

— Епӗ опыт ӗҫӗпе чылайранпа ӗҫлетӗп. Тырпулсене ӳстермели майсене тупас тӗлӗшпе тӗрлӗ майсемпе опыт туса пӑхрӑм. Тӑрӑшса ӗҫлерӗм, ҫӗре тӗрлӗ минераллӑ удобренисемпе ҫемҫетсе пытӑм. Ҫакӑн хыҫҫӑн гектартан 30—50 центнер тырӑ тухрӗ. Халӗ колхозниксем ман ӗҫе хаклаҫҫӗ, ҫӗре ҫемҫетесси ҫинчен калаҫаҫҫӗ.

Ҫапла колхозла пурнӑҫра ҫеҫ тырпул тухӑҫне ӳстерме пулат̆. Колхозсен ҫӗрӗсем пуйанланса пыраҫҫӗ, тырпул тухӑҫӗ ҫултан ҫул ӳсет. Ҫак майпа колхозниксен пурнӑҫӗ те пуйанланат̆, кулђтурланат̆.

Димитрий Степанов ӗлӗк патшан тискер саманинче ҫахал мар хӗн хур тӳснӗ. Ҫӗре ырхӑн пулнӑ, тырри пулман. Ҫавна пула тырӑ нихӑҫан та ҫур хӗлтен ытла пурӑнма ҫитмен.

Димитрий Степанов колхоза кӗрсен хӑйӗн пурнӑҫне чӑннипех те йусаса йачӗ. Халӗ вӑл чӑн-чӑнах та пуйан та кулђтурлӑ пурнӑҫпа пурӑнат̆. Унӑн пилӗк кӗтеслӗ ҫӗнӗ пӳрт пур. Пӳрт умӗнче сат пахчи пур. Унта улмуҫҫи, сирӗн, вишни йавӑҫҫисем ӳсе ҫитӗнеҫҫӗ. Пӳртре таса, ҫутӑ. Пӳртӗн пӗр пӳлӗмне експонатсем тытса усрамали тунӑ. Колхозниксем ун патне час-часах експонатсем курма пыраҫҫӗ. Степанов вӗсене експонатсем ҫинчен ӑнлантарса парат̆.

— Совет влаҫӗ пулман пулсан епӗ пайанхи ирӗклӗ, телейлӗ, тутлӑхлӑ пурнӑҫа курас та ҫукчӗ. Сталинла Конституци ӗҫлев, кану, вӗренӳ прависем пачӗ, — тет Димитрий Степанов.

Димитрий Степановӑн икӗ ачи вӑтам шкулта вӗренеҫҫӗ. Шкул ҫулне ҫитнӗ ытти ачисем йалти шкулта вӗренеҫҫӗ.

— Ӗлӗк пирӗн пеккисемшӗн вӗренӳ прави пулман, Аслӑ шкулсене вӗренме кайас пулсан, укҫа тӳлемеле пулнӑ. Халӗ апла мар. Халӗ вӗреннисӗр пуҫне стипенди тӳлеҫҫӗ. Спасибӑ Сталина пире телейлӗ пурнӑҫ туса панӑшӑн, — тет савӑнӑҫлӑн Степанов.

Д. Михайлов.

Федосейев мастӑр ҫемйи

Ҫемйе членӗсем

Федор Федосейев—Деткомиҫҫин Шупашкарти фабрикӗнчи мастер;

Анна Федосейева—Шупашкарти педучилищӑ студенчӗ;

Николай Федосейев—Крупскайа йачӗпе тӑракан вӑтам шкулта 8-ш класра вӗренет;

Колђа Федосейев—Крупскайа йачӗпе тӑракан вӑтам шкулта 3-мӗш класра вӗренет;

Тат̆йана Степанова — килхуҫи хӗрарӑмӗ, Аслӑ Совета суйламали кружокра вӗренет.

Шура Федосейев—килте пурӑнат̆.

Револђуци мана савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ пачӗ

Деткомиҫҫин Шупашкарти фабрикӗнче епӗ 1931 ҫултанпа ӗҫлетӗп. Малтанах кунта пӗчӗк ҫуртсемсӗр пуҫне нимӗн те пулман. Халӗ Окт̆абӗр револђуци пулни 20 ҫул тултарнӑ ҫӗре фабрик ӳссе пысӑкланчӗ.

1935 ҫулта стахановла йухӑм пуҫлансан, стахановла ӗҫлеме тытӑнтӑм. Уйӑхри нормӑна 225 процент тултарса пыраттӑм. 1936 ҫулта ҫӗнӗ нормӑна 120—130 процент тултарса ӗҫукҫи уйӑхра 350—400 тенкӗшер илсе пытӑм. 1937 ҫулта манӑн ӗҫ укҫи тата та ӳсрӗ. Уйӑхра 450 тенкӗрен кайа илместӗп халӗ. Ҫапла епӗ ҫулталӑкра 5 пин тенкӗ ӗҫлесе илетӗп.

Пире халђ никам та хӑратса хӗсӗрлемест. Лайӑх ӗҫлесен санӑн пурте пулат̆. Лайӑх ӗҫленӗшӗн мана 1935 ҫулта пружиналӑ кроват̆пе матрац парса премилерӗҫ. 1937 ҫулта Крымри санаторине кайма пут̆овкӑ пачӗҫ.

Ӗҫлесе илнӗ укҫапа епӗ хуҫалӑхра кирлӗ йапаласем, тумтирсем туйантӑм. Халӗ манӑн велосипед, ҫӗвӗ ҫӗлемели машин, самовар тата ыттисем те пур. Ӗлӗк пулсан кунашкал пурнӑҫ ҫинчен пирӗн пек ҫынсен шутламали те пулман.

Манӑн 4 ача. Вӗсем вӗренеҫҫӗ. Кӑҫал кану вӑхӑтне лагӗрсемпе санаторисенче ирттерчӗҫ. Хам та вӗренетӗп. Манӑн библиотекӑ пур. Кӗнекесем, хаҫат-журналсем вулатӑп, радио итлетӗп.

Пур йенчен те тулӑх, кулђтурӑла пурнӑҫпа пурӑнатпӑр епӗр халӗ. Лайӑх хватер, ҫӑкӑр-тӑвар ҫителӗклӗ. Кӑҫал хамӑн пахчаран тухӑҫлӑ ҫӗрулми илтӗм тата фабрик 500 килограм пачӗ.

Ҫакнашкал пурнӑҫа пире Сталин йулташ туса пачӗ. Ҫавӑнпа епӗ Аслӑ Совета суйланӑ чух чи малтан Сталин йулташшӑн сасӑлатӑп.

Федор Федосейев.

Пархатарлӑ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр

Пирӗн ҫемйе пархатарлӑ пурнӑҫпа пурӑнат̆. Хватер лайӑх, ҫутӑ та илемлӗ пӳртре пурӑнатпӑр. Хуҫалӑхра тӗрлӗ йапаласем кирлӗ таран пур. Тутлӑ апат-ҫимӗҫ ҫийетпӗр.

Лайӑх пурнӑҫ килӗшӳлӗ, пӗр-пӗрне йуратса пурӑнма вӗрентрӗ. Епӗр упӑшкапа, Федорпа, ачасем ҫине пӑхатпӑр та пӗтӗм кӑмӑл савӑнӑҫпа тулса ларат̆. Вӗсене ыранхи пурнӑҫ пачах иккӗлентермест. Вӗсем умӗнче телейлӗ пурнӑҫ ҫулӗ такӑр.

Епӗр хамӑр ачасене пурне те вӗрентетпӗр. Тӑватӑ ачаран виҫҫӗшӗ вӑтам шкулсенче вӗренеҫҫӗ. Хамӑн та ачасенчен йулас килмест, вӗренес килет. Иртнӗ ҫулта хут сахал пӗлекенсен шкулӗнчен вӗренсе тухрӑм. Халӗ суйлав положенине вӗренетӗп. Хаҫатсем вуласа пыратӑп. „Красная Чувашия" тата „Клич пионера" хаҫатсем ҫырӑнса илетпӗр. Кӗнекесем те нумай.

Окт̆абӗр уйавӗ ҫывхарса ҫитрӗ. Уйав кунӗнче манӑн ҫемйе пӗр ҫӗре пуҫтарӑнат̆. Сӗтел ҫинче тутлӑ апат-ҫимӗҫсем тулли пулаҫҫӗ. Пирӗн ун чухне пирвайхи сӑмах пире телейлӗ пурнӑҫ туса паракан Сталин йулташа саламланипе пуҫланӗ.

Тат̆йана Степанова—
Килхуҫи хӗрарӑмӗ.

„Отлично" пулат̆

Йаланах „отлично" паллӑпа вӗренсе пынӑшӑн мана мухтав хучӗ пачӗҫ. Халӗ Крупскайа йачӗпе тӑракан вӑтам шкулта вӗренетӗп. Вӗренӳ ӑнӑҫлӑн пырат̆. Лайӑх вӗренме мана пионерсен организацийӗ пулӑшрӗ. Политикӑла тата художествӑлӑ кӗнекесем вулатӑп. Ку мана вӗренӳре пысӑк пулӑшу парат̆.

Манӑн ӗмӗт вӑтам шкула „отлично" паллӑпа вӗренсе пӗтересси. Ку ӗмӗт пурнӑҫлӑ ӗмӗт. Манӑн ӑна пурнӑҫа кӗртме условисем ҫителӗклӗ. Епӗ ӑна пурнӑҫа кӗртетӗпех.

Колђа Федосейев

Ҫулахи кану

Федосейев ҫемйи членӗсем кӑҫалхи ҫул хӑйсен кану вӑхӑтне ҫапла ирттернӗ:

Федор Федосейев — Симферопољри (Крымра) санаторинче пулнӑ;

Колђа Федосейев—ачасен санаторинче каннӑ;

Николай Федосейев—Ҫӗрпӳри пионерсен лагӗрӗнче каннӑ;

Шурӑ Федосейев—Шупашкарти Детсадра.

Суту-илӳ организацисем сыварӑҫҫӗ

ВӐРНАР (хамӑр корр.), Колхозниксем хӗрлӗ ҫитцӑ, шпалер, сӗтел ҫине сармали клейонкӑ, занавескӑсем, вилкӑсем, ҫӗҫӗсем, тӗрлӗрен плакатсем, партипе правителствӑ руководителӗсен сӑнӗсене, сӗтелпукансем, патефонсемпе пластинкӑсем т. ыт. те ыйтаҫҫӗ. Анчах Вӑрнарти пӗр магазинра та ҫакӑ, колхозниксем ыйтакан таварсем, ҫителӗклӗ мар. Суту-илӳ организацисем колхозниксене кирлӗ таварсене илсе килес ӗҫе организацилемеҫҫӗ.

Ейзенбраун.

Суйлав саккунне начар вӗрентеҫҫӗ

СӖНТӖРВӐРРИ. Районра Суйлав саккунне вӗренесси пайанхи куна ҫитсе те тивӗҫлипе пулса пымаст̆. Райӗҫтӑвкомпа йалсовечӗсем суйлав саккунне вӗренесси ҫинчен сахал мар сӑмах ҫаптарнӑ. Ҫапах та ӗҫсем малала кайман. Суйлав саккунне вӗрентме районӗпе 327 кружок организациленӗ, вӗсенче 10165 суйлавҫӑ вӗренет. Районра пӗтӗмпе 24.010 суйлавҫӑ шутланат̆. Ҫапла вара 13845 суйлавҫӑсене нимӗнле кружока та йавӑҫтарман. Вӗсем суйлав саккунне тӗплӗн пӗлмеҫҫӗ. Наратчаккинчи „Хӗрлӗ Сормово" колхозра окт̆абӗрӗн 25 мӗш числинче 6 кружок организациленӗ. Анчах вӗсем пӗри те ӗҫе тытӑнман. Аксаринӑра йалсовет членӗсем тата йалсоветри активиссем ваљђи организациленӗ кружок йӗркелӗ план тӑрӑх ӗҫлет. Кружока пуҫламӗш шкул пуҫлӑхӗ Н. Лебедев йулташ йертсе пырат̆. Пӗтӗмпе 50 ҫын ытла вӗренеҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах ытти 12 кружоксенчен нумайӗшӗ пачах ӗҫе тытӑнман. Щӑпчӑккасси йалӗнчи кружока йертсе пыма Павлова учителђницӑна, Шупашкарҫин йалӗнчи кружока А. Йемеров учителе хушнӑ, анчах вӗсем ӗҫе тытӑнмаҫҫӗ.

Ф. Смирнов.

Уйав умӗн

Чӑвашпедрабфакра вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑранпах хор кружокӗ ӗҫлет. Унта йурлама 35 студент ҫӳреҫҫӗ.

Кружок 11 занђати туса ирттернӗ. Окт̆абӗр праҫникне хатӗрленнӗ май, хор ҫӗнӗрен 5 тӗслӗ йурӑ вӗренчӗ. Ҫавӑн пекех хор радиостуди урлӑ йурласа пама хатӗрленет.

П. Синичкин.

Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револђуци пулнӑранпа 20 ҫул тултарнӑ тӗле.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Смољнӑй сурчӗ—Окт̆абӗрти восстани штабӗ.
Е. Хайкин фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

Денискинск районĕнчи (Куйбышев облаçĕ) Туарминск йалсоветĕнчи Пушкин йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пухувĕ Национаљнăçсен Советне депутата суйлама

Сергей Ксенофонтович Коротков

кандидатурине палăртнă.

Денискинск районĕнчи (Куйбышев облаçĕ) Туарминск йалсоветĕнчи Пушкин йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем Национаљнăçсен Советне депутата суйлама кандидатурăсем палăртма октаберĕн 29-мĕшĕнче пĕрлехи пуху туса ирттернĕ.

Пуху Национаљнăçсен Советне суйламали Куйбышев суйлав округĕнчен Национаљнăçсен Советне депутата суйлама кандидатурăсене Сталин йулташа, Косиор йулташа, Косарев йулташа, Мехлис йулташа, Коваленко йулташа тата Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕн заместительне орденоносец Сергей Ксенофонтович Коротков йулташа палăртнă.

Довереннăй çынсем ĕçре

КАЛИНИН, нойаберĕн 4-мĕш (ТАСС). Калинин хула суйлав округĕнче суйлав участкисенче агитаципе массăлă ĕçсем тума 213 доверенăй çын уйарнă. Вĕсен шутĕнче—Калинин йачĕпе тăракан арлакан фабрикри партире тăман работница ватерщчицă Козлова йулташ пур. Вăл ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенийе вĕрентне, унăн пропагандăлă ĕç опычĕ пур. ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсемшĕн агитаци тума çавнашкалах „Красные пески“ ертелĕн партире тăман колхозникне Чернышев йулташа хушнă.

Нумай суйлав участкисенче доверенăйсем ĕçлеме тытăннă та ĕнтĕ. Вĕсем суйлавçăсене округсенчи суйлав умĕнхи пухусен решенийĕсем çинчен каласа параççĕ, вĕсене Калинин хула суйлав округĕ тăрăх палăртнă ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйламалли кандидатсен биографисемпе паллаштараççĕ.

Деверенăй Тимофейев йулташ суйлавçăсен хватерĕсенче Сталинла Конституци тата ăна тăваканĕ—Сталин йулташ çинчен темиçе каласу та туса ирттернĕ.

Партин Калинин хулинчи райкомĕсем доверенăй çынсем ваљљи йатарласа инструктивлă семинарсем организацилеççĕ.

Ача амăшĕпе ачашăн сталинла тăрăшни

Революциччен Российăра ача амăшĕсемпе ачасен консултацисем пулман. Совет влаçĕнче çавăн пек консултацисене пиншер организациленĕ: 1931 çулта вĕсем 2.475 пулнă, кăçал 4.175 пур. 1914 çулта больницасемпе ача çуратмали çуртсенче ача çуратакан хĕрарăмсем ваљљи 6.824 койка пулнă, кăçал ун пек койкăсем 81,342 пур. Революциччен йаçлĕсенче койкăсем 550 пулнă, халĕ вĕсем 627.817—1.141 хут ытларах пур.

Ача амăшне ачашăн сталинла тăрăшни совет хĕрарăмĕпе совет ачисен пурнăçне аванлатакан тата çĕнĕ формă—йавăр çын хĕрарăмсемпе ача амăшĕсем ваљљи канмали çуртсем туса пани пулать. Аборт тума чарасси, ача çуратакансене укçан пулăшасси çинчен декрет кăларни çулталăк тултарнине палă туса, Пĕтĕм Союзри Профессилĕ Союзĕн Тĕп Совечĕн президиумĕ 1937 çулта çавăн пек канмали çуртсене 835 койкă вырнаçмала 15 организацилеме йышăннă. Вĕсене организацилесе йĕркелеме 2 мĕлйун та 500 пин тенкĕ укçа уйарнă.

Йулашки сведенисем тăрăх, 1937 çулхи çентаберĕн 4-мĕшне Совет Союзĕнче нумай ачалă ача амăшсене 908 мĕлйун тенкĕ пособи панă.

(ТАСС).

Колхозăн пуйанлăхĕ

Алма-Ата, нойаберĕн 4-мĕш (ТАСС). Кустанай облаçĕн Карабалык районĕнчи „Новая деревня“ йалхуçалăх ертелĕн колхозникĕсем аслă Октабĕр праçникне савăнăçлă кĕтсе илеççĕ. Кăçал колхоз 200 пин пăт тырă пухса илнĕ. Колхозниксем ĕçкунĕ пуçне пĕр пăт çурă тырă тата 3 шер тенкĕ укçан илеççĕ. Величко Иван Игнатйевич колхозник хăй ĕçлесе тунă ĕçкунĕсемшĕн 1.400 пăт тырă тата 3 пин тенкĕ укçан илет.

Праçник ваљљи колхозниксем пиншер метр мануфактурă, атă-пушмак, коверсем, хаклă йышши кĕпесем, музык хатĕрĕсем, сĕтелпукансем туйанаççĕ.

Пин центнер кăшман тăвакансем

ЧЕРНИГОВ, нойаберĕн 2-мĕш (ТАСС). Талалайев, Смелов, Борзњан, Межин тата Ромен районĕсенчи колхозсем сахăр кăшманне кăларса пĕтернĕ. Борзњан районĕнчи колхозсем питĕ пысăк тупăшлă сахăр кăмшанĕ пухса илнĕ. Кунта районĕпе вăтамăн илсен, гектартан 285 центнер кăшман тухнă.

Кăçал рекордлă тухăçлă кăшман стахановла звеносем пухса илнĕ. Дмитрийев районĕнчи „Червоный прапор“ колхозĕн Беднайа Зинаида звени гектартан 700-шер центнер кăшман кăларнă. Бахмач районĕнче пысăк тупăшлă кăшман туса илессипе пулнă ăмăртура Мисько Ориш звени пысăк çитĕнӳ тунă. Вăл хăйĕн участкинче гектартан 1.300 центнер кăшман пухса илнĕ.

Францире Испани пăлхавçисен шпионла организацине тупса палăртнă

ПАРИЖ, нойаберĕн 4-мĕш (ТАСС). Италин фашисла авантюрисне Тамбуринине арĕсленĕ майĕпе, Франци полицийĕ Францире пурăннă Испани пăлхавçисен шпионла организацине тупса палăртнă. Ку организацире нимĕçсемпе италйанцăсем тăнă.

Францири социалисла партин „Попӳлер“ хаçачĕ, Францин йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕ Францин кăнтăр-хĕвеланăçĕнче шпионла ĕçсем тунă. Франко агенчĕсене—хĕрĕх шпиона пĕр тăхтамасăр Франци çĕрĕ çинчен кăларса йама хушнă, тесе пĕлтерет.

Шăхасан районĕнчи Уйкас Кибек йалсоветĕнче 1,5 километр тăршшĕ пĕве тунă. Çак пĕве шывĕпе Телман тата Куйбышев йачĕпе тăракан колхозсем усă кураççĕ.

Цыганов фото-укерчĕкĕ.

Укçа-тенкĕ планне Чăваш АСС Республикĕнче мĕнле тултарса пынине кăтартакан

СВОДКĂ

(IV-мĕш квартăл, нойаберĕн 1-мĕшне)

Район йачĕсем	Плана тултарнă (процентпа)
Çĕрпӳ	34,7
Сĕнтĕрвăрри	32,4
Шăхасан	32,3
Вăрнар	32,2
Кувакинă	31,6
Йетĕрне	31,5
Тутаркас	31,0
Шупашкар хули	30,6
Трак	29,8
Елĕк	28,2
Пăрачкав	28,2
Тăвай	28,0
Куславкка	27,1
Канаш	26,4
Улатăр хули	26,1
Шăнкăртам	25,5
Йĕпреç	25,4
Турхан	24,9
Вăрмар	24,3
Йелчĕк	23,9
Çĕмĕрле	23,3
Улатăр	23,0
Патăрйел	22,2
Хĕрлĕ Чутай	22,7
Шăмăршă	19,8
Шупашкар	17,4
Ишлей	16,2
Пĕтĕмпе	26,9

Примерлă танкис

(Красноармейец çырăвĕ)

Александр Матвейев мĕн ачаранпах Хĕрлĕ çар командирĕ пулма ĕмĕтленсе пурăннă.

Йетĕрнери педтехникумра вĕреннĕ чухне чи малтан ГТО значокне илекенни вăл пулнă, унтан вара оборонăн ытти значокĕсене те илнĕ. Матвейев йулташ Хĕрлĕ çар ретне лайăх хатĕрленсе килнĕ. Халĕ вăл пирĕн çар чаçĕнче чи лайăх физкултурник вырăнĕнче тăрать, политикăпа çар техникине вĕренессипе те малта пырать. Çавна кура ăна пĕр çул вĕреннĕ хыççăнах танк командирĕ туса хучĕç.

Унăн танкĕ йаланах лайăх ĕçлет. Тăшман пирĕн çĕр çине вăрçăпа килес пулсан, унăн танкĕ пирĕн çар чаçĕн колонни пуçĕнче пырĕ. Епĕр тăван çĕршыва сыхлама хатĕрех тăратпăр.

Н. Григорйев.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Колхоз председателне мĕнле суйлани тата мĕнле ĕçсем туни çинчен“

1937 çулхи октаберĕн 8-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра Ив. Моçсейев йулташăн „Колхоз председателне мĕнле суйланни тата мĕнле ĕçсем туни çинчен“ йатлă заметкă тухнăччĕ. Заметкăра Василйев „Çĕнĕ Марка“ колхоз председателне хĕсĕнсе кĕрсе колхоз пурлăхне йухантарса пурăнни çинчен çырнăччĕ.

Заметкăна тĕрĕсленĕ хыççăн, Ишлей районĕнчи çĕреç пайĕнчен çапла пĕлтерчĕç: „заметкăра кăтартса çырнă фактсем тĕрĕс пулчĕç. Колхоз председателĕ Василйев, завхоз Огружников тата ревком председателĕ Семушкин колхоза тĕрĕс йертсе пырас вырăнне, пĕр пĕрин сăтăрлă ĕçĕсене витĕнтерсе, пытарса пурăннă. Колхоз пур ĕçсемпе те кайа йулса пырать. Колхозниксен ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине вăхăтра çырса пымаççĕ. 100 пăта йахăн тарнц тыррине патшалăха парасран пытарса хăварнă. Çак ĕçсемшĕн айăплисене суда парса ответ тыттарма ĕçе прокурор аллине панă“.

„Ĕçе хăçан йĕркелесе çитеретĕр“

Августăн 23-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра А.Петров йалкор Ишлей районĕнчи Тивĕш йалповĕн правленинче ĕçлекенсем сисĕмсĕрленсе пурăннине пула, Йамайкассинчи Корнилов прикашчик 2.900 тенкĕ, склад пуçлăхĕ Кузьмин 3.000 тенкĕ растратă туни тата ыттисем çинчен çырнăччĕ.

Заметкăна Ишлей районĕнчи прокурор вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Кузьмина ĕçрен кăларса суда панă.

„Халăх тăшманĕсене кăкласа ыватмала“

Çентаберĕн 26-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра Н. Косойкинпа Ник. Падиаров йулташсем Шăмăршă районĕнче нумай вăхăт хушши халăх тăшманĕсем районри руководителĕсен шутĕнче тăрса, хăйсен тăшманла ĕçĕсене туса пурăнни çинчен çырнăччĕ. Заметкăра çырнисем тĕрĕс пулнă. Халăх сучĕ Шченов агронома виçĕ çуллăха, Кардаша 5 çуллăха тĕрмене хупмала суд тунă. Крыловпа Павлова арĕсленĕ. Салмина ĕçрен кăларса суда панă, Алексейева ĕçрен кăларнă.

Уйав умĕн

** ШĂХАСАН. Туçи Чуринăри комсомол пуçламĕш организаци çумĕнчи драмкружок Октабĕр уйавĕнче „Айдар“ пйесăна лартса пама хатĕрленет.

И. Павлов.

Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Государствă шалти займĕ

Проигрышсăр кăларăм

Тăваттăмĕш тиражăн таблици

Тираж 1937 çулхи октаберĕн 25 тата 26-мĕшĕнче Алма-Ата хулинче пулса иртнĕ.

Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займĕн проигрышсăр кăларăмĕнче мĕн пурĕ 200 разрйад. Таблицăра кăтартнă серисен тата облигацисен номĕрĕсем займăн пур 200 разрйачĕсенче те выљăса илнĕ.

Таблицăра выљăса илнĕ серисен 100 номĕрне çапнă, вĕсем пур 200 разрйадсенчи номĕрĕсене кăтартаççĕ. Тираж тумали условисем тăрăх кашни серирех пĕр вăхăтра пĕр серири 50 облигаци выљăса илет. Çапла вара таблицă выљăв тухнине çапла кăтартса парать (100×50)=5.000 облигаци пĕр разрйадра. Займăн пĕтĕм 200 разрйадĕнче (5.000×200=1.000 000 выигрыш пĕтĕмпе 164.920.000 тенкĕлĕх.

Таблицăри серин пĕрпĕр номĕрĕ хыççăн *) паллă пулсан, вăл вара ку облигаци номĕрĕ çине йунашар кăтартнă выигрыш тухнине пĕлтерет, çав серири ытти 49 облигаци номĕрĕсем çине 150-шар тенкĕ тухнă пулать. Сери номĕрĕ хыççăн 1—50 цифрăсем çапнă пулсан, вăл вара ку серири пур 50 облигаци номĕрĕсем çине йунашар кăтартнă выигрыш тухнине пĕлтерет.

Выигрыш укçине тӳленĕ чух облигаци хакне выигрыш укçи шутне кĕртсе шутлаççĕ.

Таблицăра кăтартнă выигрышсем, çĕршер тенкĕлĕх облигацисем çине тивеççĕ. 50,25 тата 10 тенкĕлĕх облигацисем çĕр тенкĕлĕх облигацин пайĕсем пулаççĕ, кунашкал облигацисен пайĕсем çине тухнă выигрыш укçине те иккĕмĕш, тăваттăмĕш, вуннăмĕш пайĕсене шутласа тӳлеççĕ.

500,300 тата 200 тенкĕлĕх облигацисем çинче пиллĕк, виççĕ йе иккĕ облигаци номĕрĕсем уйрăм пулаççĕ, вĕсем 5,3 йе 2 çĕр тенкĕлĕх облигацисем шутланаççĕ. Сăмахран ку облигацисен пĕр-пĕр номĕрĕ çине 3.000,1.000 йе 500 тенкĕ выигрш тухнă пулсан, ку облигаци çинчи ытти номĕрсем 150-шар тенкĕ выљăса илнĕ пулать. Пиллĕк çĕр, виçĕ çĕр йе икĕ çĕр тенкĕлĕх облигаци серийĕ çине 200 йе 150 тенкĕ выигрыш тухнă пулсан кунашкал облигаци тăрăх пиллĕк, виççĕ йе иккĕ выгрыш (кашни çĕр тенкĕлĕхшĕн уйрăм) тӳлеççĕ.

Выигрыш укçине тираж таблицисем тăрăх перекет кассисенче тӳлеççĕ. Тираж таблицисене—„Правда“, „Известия“, “Труд“, „Экономическая жизнь“ „Казахстанская правда“ тата „Социалистик Казахстан“ хаçатсем çинче пичетленĕ, тата государствă перекет кассипе государствă кивçенлĕхĕн Тĕп Управленийĕ йатарласа официаллă таблицăсем пичетлесе кăларнă.

Проигрышсăр кăларăмри пур 200 разрйадри серисемпе облигацисен çак номĕрĕсем çине выигрыш тухнă

серисен №№	облигацисен №№	Выигрыш тухнă тенкĕпе	серисен №№	облигацисен №№	Выигрыш тухнă тенкĕпе	серисен №№	облигацисен №№	Выигрыш тухнă тенкĕпе
00093	18*)	500	06084	1—50	200	12787	45*)	500
00444	25*)	500	06618	37*)	500	12924	1—50	200
00459	1—50	150	07426	09*)	500	13350	10*)	500
00511	1—50	150	07544	47*)	500	13739	25*)	500
00617	1—50	150	07545	49*)	500	13740	1—50	150
01026	1—50	150	07691	1—50	150	13911	1—50	150
01115	1—50	150	07771	46*)	1000	14049	38*)	500
01137	1—50	150	07804	04*)	500	14282	13*)	500
01151	1—50	200	07805	38*)	500	15007	1—50	200
01184	1—50	200	07831	1—50	200	15220	1—50	200
01397	1—50	200	08150	1—50	200	15273	25*)	500
01442	1—50	200	08168	21*)	500	15362	1—50	200
01449	1—50	150	08897	1—50	200	15698	1—50	150
01540	1—50	150	09168	06*)	500	15777	1—50	200
01983	20*)	500	09231	29*)	500	16102	42*)	500
02213	1—50	150	09303	1—50	150	16117	08*)	500
02291	01*)	500	09440	45*)	500	16135	30*)	1000
02398	1—50	150	09867	08*)	500	16307	41*)	500
02440	1—50	150	10019	43*)	500	16451	1—50	200
02640	1—50	200	10276	26*)	500	16506	1—50	150
03270	24*)	500	10296	42*)	500	16694	23*)	500
03273	1—50	200	10374	1—50	150	16795	41*)	500
03988	1—50	150	10399	25*)	500	16855	16*)	500
04083	1—50	150	10474	1—50	200	16975	43*)	500
04656	1—50	150	10730	49*)	500	17128	01*)	500
05004	35*)	500	10870	15*)	500	17553	44*)	3000
05188	35*)	500	11297	22*)	500	17635	01*)	500
05203	07*)	500	11764	24*)	500	17761	36*)	500
05211	32*)	500	12367	09*)	500	17927	1—50	200
05266	29*)	500	12386	09*)	500	18206	1—50	150
05431	1—50	150	12488	1—50	150	18366	1—50	200
05579	1—50	200	12551	47*)	500	18895	40*)	1000
06031	08*)	500	12699	38*)	1000	19003	12*)	1000
						19440	08*)	500

*) Ку серири ытти 49 облигаци пурте 150-шар тенкĕ выљăса илнĕ.

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ.

Театр

Çирĕп болшевикăн сăн-сăпачĕ

(„Хурçă йепле хĕрнĕ“ пйесă чăваш театрĕнче)

Орденоносец Н. Островский писатĕл-коммунис хăйĕн „Хурçă йепле хĕрнĕ“ романĕнче пĕтĕм чунĕ-чĕрипе Ленин—Сталин партийĕшĕн кĕрешекен, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне революцине пана Павел Корчагин болшевикăн сăн-сăпатне сăнласа кăтартать. „Хурçă йепле хĕрнĕ“ романа мĕлйун-мĕлйун совет çыннисем пысăккăн интересленсе вулаççĕ, вăл роман тăрăх совет çамрăкĕсем Корчагин пек çирĕп болшевик пулма вĕренеççĕ.

„Çынăн чи хакли вăл—пурнăç. Етем пĕрре çеç пурăнать, пурнăçа лайăх пурăнса иртермеле, тĕллевсĕр пурăнса иртернĕ çулсемшĕн хуйхăрса асапланмала ан пултăр, ниме тăман ăнăçсăр иртнĕ вăхăтшăн пите намăс ан пĕçерттĕр, вилнĕ чухне çын: пĕтĕм пурнăçăма тата пĕтĕм вăй-халăма чи чаплă ĕçе—етемлĕхе ирĕке кăларас ĕçе патăм, тесе калама пултартăр“.

Павел Корчагин калана çак сăмахсенче мĕн чухлĕ пархатарлăх!

Н. Островскин романĕ тăрăх И. Судаков инсценировкă тунă „Хурçă йепле хĕрнĕ“ пйесăна Чăвашсен государствă академи театрĕ Октабĕр уйавĕсенче лартма хатĕрленĕ. Нойаберĕн 3—4-мĕшсенче пйесăна выљăса пачĕç ĕнтĕ. Романри геройсене, чи малтанах Корчагина, сценă урлă тĕрĕс кăтартса памала. Çак пысăк та ответлă задачăна мĕн таран пурнăçа кĕртме пултарчĕç-ха актĕрсем?

Павел Корчагин ролĕнче выљăкан çамрăк актор Б. А. Алексейев, пĕтĕмĕшпе илсен, хăйĕн ролне ăнланни курăнать. Корчагин станцăра Жухрай матроса полици аллинчен хăтарни, вăл тĕрмере ларни, вутă турттарма вăрманта чукунçул туни, шуррисемпе çапăçни, йулашкинчен—хăрушă чирпе хăйулăн кĕрешни—çак сценăсенче Алексейев актор Корчагин сăн-сăпатне питĕ витĕмлĕ те ĕненмеле кăтартса парать. Анчах актор Павкăн ача чухнехи пурнăçне тĕрĕсех ăнланман. Вăл, Корчагин, пролетари ачи, мĕн ачаранпах йавăр ĕçе кӳлĕннĕскер, хăйĕнпе тантăш буржуй ачисене класлă тарăхупа курайманст. Актор выљанине пăхса ларсан, çамрăк Павкă урамра кама курнă çавăнпа тӳпелешме йуратакан çĕтĕк-çатăк ача пек туйăнса кайать. Чăнах та, пйесăн йулашки пайĕсенче Корчагин сăн-сăпачĕ роман çинчи пекех тухнă. Ку Алексейев акторăн пысăк çитĕнӳвĕ.

Корчагин амăшĕ (А. Е. Йегорова актрисă)—хăйĕн паттăр ывăлне тивĕçлĕ, мухтавлă хĕрарăм. Актрисă, болшевик амăшĕн сăнне питĕ уççăн кăтартса парать. Çавăн пекех Жухрай (артис А. К. Ургалкин), Артем (артис П. Т. Медиков), Тоња Туманова (актриса М. П. Иванова), Ритă Установич (А. А. Долгова), врач (К. Е. Йегоров), комендант (Н. С. Айзман), инженер (вăлах) ролĕсем туллин сăнланса тухнă.

Партизансен отрйачĕн начаљникĕ Булгаков ролĕнче выљакан Л. Ф. Семенов актор тата Йермаченко партизан ролне выљакан Д. И. Мйасников актор—питĕ уçăмсăр, çемçешке çынсем пек пулса тухнă. Вĕсем калаçнинче те, хускалнинче те граждăн вăрçин паттăр таппи курăнмасть.

Пĕтĕмĕшпе илсен, акторсен коллективĕ, „Хурçă йепле хĕрнĕ“ пйесăна ăнăçлăн выљăса пачĕ. Пйеса хамăрăн социалисăмлă аслă тăван çĕршыва йуратма, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме вĕрентет. Ку пйесăна Шупашкарти пиншер çынсем хавасланса пăхĕç.

Сценăсене пĕлсе те лайăх илемлетме тăрăшнă. С. Константинов.

Чăваш АСС Республикĕнчи пур автохуçалăхсене те

Чăваш АСС Республикĕнчи Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленийĕ çумĕнчи Госавтоинспекци 1937 çулхи нойаберĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа автопаркри автомашинăсене техникă йенчен пăхма тытăнать.

Шупашкарти автохуçалăх руководителĕсен тата шоферсен пыма чĕннĕ пĕлтерӳ тăрăх хăйсен автомашинисене Госавтоинспекцине илсе пырса кăтартмала, районсенче—Районсенчи Милици уйрăмĕсене.

ЧАСС Республикĕнчи Госавтоинспекци.

ЧАССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленийĕ.

„Росснабфилм“ трестăн Чăваш кантурĕ

Чăваш АСС Республикĕнчи кино-театрсен екранĕ çине кăларать:

Саслă, илемлĕ çĕнĕ филм

За Советскую Родину

Ленин орденлĕ Ленинградри „Ленфилм“ кино-студийĕ тунă. Сценари Геннадий Фиш тата Ю. тата Р. Музыкант тăвансен.

Саслă, илемлĕ çĕнĕ филм

Дума про козака Голоту

А. Гайдар „РВС“ повĕçĕ тăрăх „Союздетфилм“ киностудийĕ тунă. Сценари автăрĕ тата режиссор-И. Савченко.

2—1.

Шупашкарти „Кожупряжь“ ертелне

атă-пушмак çĕлекенсем, çăматă йăвалакансем, сторожсем тата уборщицăсем КИРЛĔ.

„Кожупряжь“ ертелĕн Правленинче ыйтса пĕлмеле.

5—5. АДРĔС: Шупашкар, Ленин урамĕ, 6.

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хакĕсем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 841. Гор. Чебоксары, Типографии № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 2370 Тираж 13964 58—92 см. 1—1 п. л.

II